Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ЙАНВАР
27
КĔÇНЕРНИКУН
21 (4834)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Тĕпком решенисене пурнăçа большевикла кĕртмеле

Парти Тĕпкомĕн иртнĕ çулхи февраль-мартра пулса иртнĕ Пленумĕ хыççăнхи вăхăтран вара пайанхи куна çитиччен пирĕн парти хăйĕн речĕсене троцкисла-бухаринла шпионсенчен, диверсантсенчен, буржуалă националистсенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртерчĕ. Ку ĕçе чăннипех социализм çĕршывĕ капитализм тĕнчине хирĕç тунă çĕнтерÿлĕ пысăк сапăçусемпе тан теме пулать. Пирĕн парти хăйĕн речĕсене тасатса тата ытларах тĕреклентĕ, парти масси политикăлла йĕнчен ÿссе çирĕпленчĕ. Троцкисла-бухаринла провокаторсемпе сăтăрçăсен йăвисене çĕмĕрсе тăкас ĕçпе пĕрлех парти, совет, хуçалăх руководствине çĕнĕ кадăрсем кăларăс ĕç пулса пычĕ. Руководствăна çĕнĕ ĕçре тĕрĕсленнĕ çирĕп кадрсем тăчĕç.

Çĕнтерÿсем пысăк. Пирĕн парти организацисем хăйсен речĕсене фашисла агентсенчен тасатас ĕçре чылай пысăк йăнăшсем туса пĕтермен пулсан, çак çĕнтерÿсем тата та пысăкрах пулма пултарнă.

Парти организацисемпе вĕсен руководителĕсем, чылай чухне, коммунистсене партирен кăларас ĕç çине партие тивĕçлĕ мар меслетсемпе, сăмăлтайла, чунсăр-бÿрократла пăхма пуçланă. Ун пек организацисемпе руководителсем коммунистсем çинчен пĕтĕчешерĕн шутлама пуçĕпех манса кайнă, вĕсем пинĕн, вуншар пинĕн кăна шутлама пĕлеççĕ. Вĕсемшĕн пулсан коммунистсене партирен уйăрса кăларса ывăтасси нимĕн те мар. Вĕсем çакăн пек „ĕçлени"-пе тискер сутăнчăк, киревсĕр шпион-лепекен, пирĕн провокатор-карйеристсем усă курна, тĕрĕссипе илсен, хăйсем те карйеристсен, партирен нумайăшăн кăларса пăрахнине чапа тухма пăхакан, аслă ĕçе ларма ăмсанакан çынсен ĕçне тунă, чăн-чăн тăшмана çапас вырăнне нимĕн айăпсăр, тасаран коммунистсене çапма пуçланă, тăшманла туссене, йе туссемпе тăшмана уйăрса илеймен пулнă. Тăшман хăйĕн сăтăрла ĕçĕнче пичетпе усă курма пăхнă. Пирĕн хаçатсем те тасаран коммунистсенех вырăнсăр тăшман йатне пама пуçланă. Сăмах та çук, пирĕн пичет, уйрăмăн—„Чăваш Коммунĕ" хаçат та уйрăм коммунистсене, работниксене вырăнсăр тăшман йатне панисем пулнă. Кунта „Чăваш Коммунĕ" хаçата йертсе пыракан коммунистсем те айăплă. Анчах, çавăн пекех, кунта айăпĕ парти Обкомĕнче те, райкомсенче те, хула комитетĕнче те пур. Никампăн та пĕлмен ĕç мар, парти комитечĕсем парти уставĕн 8-мĕш пунктинче: партирен кăларни çинчен партилĕ пичетре çапса пĕлтермеле тенине манса кайнă. Апла çеç те мар, хаçатсем çинче уйрăм работниксем пирки тĕрĕс мар тăшман йатне панă хыççăн та, парти комитечĕсем çав йăнăша тÿрлетес тесе хăйсем йенчен пÿрне çине пÿрнепе те шаккаса пăхман.

Хаçатсен йăнăшĕ çинчен сăмах пынă чухне епĕр, сахалтан та çакăн пек фактсем патĕнчен иртсе кайма çук тесе шутлатпăр: пайанхи куна республикă центрĕнче тухса тăракан 5 хаçатран пĕрин те редактор çук. Çакăн пек ĕçсем вĕсем, паллах, хаçат редакцисем умне хăйне майлă йавăрлăхсем кăлармасăр иртме пултараймаç. Парти Обкомĕн пысăк çитменлĕхĕ вăл—хĕрÿ вăхăтра хаçатсене ал-урасăр тăратса хăварни пулать. Парти Обкомĕн парти пропагандипе агитаци тата пичет пайĕ çинчен каламастпăр та ĕнтĕ. Вăл хаçатсене нихăш йенчен те йертсе пыман. Пирĕн хаçатсем хăйсен кулленхи практикăлă ĕçĕнче пулăшу Обкомран ытларах парти Тĕпкомĕнчен илсе ĕçленĕ, парти Тĕпкомĕ хаçатсемпĕн Обкомран çывăхарах пулнă.

Тĕпком Пленумĕ парти организацисенче вырăнсăр шанмалăх туса хуни çинчен калать. Пулнă-и пирĕн организацире ун пек йапаласем. Пулнă.

„Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ Чалдун йултапа (Искусствăсен комитечĕ çумĕнчи пуçламĕш организаци парторгĕ, суйлав комиçсине пичет представителĕ туса йама уйăрать. Хула комитет секретарĕ Смирнов йулташ: „Чалдуна епĕр политикă йенчен шанма пултараймастпăр, ун çинчен материал пур, ун вырăнне урăх çынна йарăр" тесе пĕлтерет. Анчах пире çакă тĕлĕнтерет: мĕнле майпа хула комитечĕшĕн политикă йенчен шанчăксăр çынсем парторг пулса ĕçлеме пултараççĕ?

Тăшмансем —буржуалă-националистсем „советла общиствăсен" вывескисемпе витĕнсе, „тăван çĕршыва вĕренекен" контрреволюцилĕ „общиствăна" пĕрлешсе, Чăваш çĕршывне капитализм йĕркине таварса килес тесе сахал мар киревсĕр ĕçсем турĕç. Вĕсем тата кĕсйере партии билечĕ чиксе çÿрекен вĕсен шанчăклă туçĕсем тĕрлĕ майсемпе хăйсен контрреволюцилĕ ĕçĕсене „витĕмлĕрех" тăвас шутпа, çак общиствăна коммунистсене хутшăнтарма тăрăшнă. Чылай коммунистсем вĕсен серепине çакланнă. Çак тăшмансене пирĕн тăрă шыв çине кăларса пĕтерсе лартмала пулнă. Анчах кашни сыпрах, кашни коммунисрах тăшман кăна курма пăхакан, çапла майпа хăйсене тÿрре кăларма пăхакан, хăйсене пур йенчен те тасаран коммунистсем пек кăтартма пăхакан карйерис-коммунистсем нимĕн те [illegible] коммунистсенех контрреволюционер, халăх тăшманĕ йатне пама пуçланă.

Çакăн пек лару-тăру туса хуни вăл паллах, парти организацисенĕ чăн-чăн тăшмансене тăрă шыв çине кăларассинчен пăрса йама пултарнă, тăшмана хамăр тусран уйăрса нимле мар туса хунă.

Комсомолăн Облăçри XIV-мĕш конференцийĕ комсомол ĕçне вăйлатса йарас йенĕпе пысăк ĕçсем турĕ. Анчах, çакăнпа пĕрлех, çак конференцире уйрăм коммунистсене вырăнсăр тăшман йатне панисем те пулнă. Калас пулать, конференцин ĕçĕсене тÿрĕ çулпа йама тăрăшни Обком йенчен пулман, пирĕн пичет те хÿрере çапкаланса пынă.

Тĕпком Пленумĕн решенисене тĕрĕс ăнлантарса парасси, парти массине Тĕпком решенисемпе хĕçпăшаллантарса тăшмансене пĕр çын хăварми пĕтерме мобилизацилесси, партин массине тимлĕхне, сыхăлăхне хăпартасси— пĕтĕм организацисен задачĕ. Тăшманла елементсем, партирен тивĕçлипе кăларнă обывателле елементсем Тĕпком решенисене хăйсене майлăн ăнланаççĕ. Вĕсем, халĕ ĕнтĕ партирен кăларнисене пурне те кайала илеççĕ, тесе пуçĕсене çĕклеççĕ. Вĕсене епĕр калатпăр: есĕр шутланă пек пулмĕ!

Пирĕн тăшмансене çине тăрса, пĕр çын хăварми тупса пĕтермеле. Ку тĕлĕшпе пĕр йенчен тепĕр йенне сиксе ÿкни пулмала мар. Хамăр ĕçре пулнă йăнăшсене тÿрлетмеле, парти организацисене çĕмĕрсе тăкма хăтланнă карйерис-коммунистсене—хамăр ретрен шăлса ывăтмала, партирен кăларас ĕçре пулнă сăтăрла ĕçсен йулашкисене çине тăрса, хăйулăн та хăвăрттăн пĕтермеле. Коммунистăн кунçулĕ çинчен тăракан ыйтăва татса панă чух, партирен кăларас, йе партирен кăларнисене тепĕр хут партие илмеле тăвас ыйтăва татса панă чух нихăçанхинчен ытла сисĕмлĕ, тимлĕхлĕ пулни, йулташсене хăйсен айăпĕсем çинчен тĕплĕн каласа памала туни, кашни коммунис çине уйрăмăн пăхни кирлĕ. Çакăн пек тума хушать пире Парти Тĕпкомĕн Пленумĕ, çакăн пек тума хушать пире Сталин йулташ.

Итали хулисенчи пăлханусем

ПАРИЖ, йанварĕн 25-мĕш. (ТАСС). „Йуманите" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Италире фашисла режима хирĕç хумханусемпе массăлă демонстрацисем пулса иртеççĕ. Пармре (çурçĕр Итали) 500 хĕрарăм хăйсен кăкăр ĕмекен ачисемпех хулан аслă площадне тухнă та вăрçа хирĕç протес тунă тата ирĕксĕрлесе Испанине йанă хăйсен упăшкисене кайала илсе килме ыйтнă. Полици хĕненĕ пулсан та, хĕрарăмсем нимрен хăрамасăрах фашисла режима, вăрçа тата хальхи чухăн пурнăçа ылханнă. Полици çĕр хĕрарăма йахăн арĕсленĕ. Анчах та, хулари пĕтĕм халăх пăлханма пуçланă пирки, арĕсленĕ хĕрарăмсенчен нумайĕшне полицин çавăнтах ирĕке кăларма тивнĕ.

Брешиара „Бреда" заводри рабочисене арĕсленĕ, вĕсене Миланри „Бреда" предприйатисенчи рабочисемпе çыхăну тытнă пуль тесе шанмасăр арĕсленĕ: Миланри „Бреда" предприйатисенче вăрçа ăсатма хатĕрлесе хунă çар снарйаженийĕсене массăлăн пăснă фактсем тупса палăртнă пулнă.

Темиçе кун кайарах Феррарте (Çурçĕр Итали) фашисла режима хирĕçле демонстраци пулса иртнĕ. Кунта тавар хакĕсем ÿснине хирĕç протеслеме темиçе çĕр хĕрарăм урамсене тухнă. Полици хĕрарăмсене ним хĕрхенмесĕр хăваласа салатнă тата вĕсем хушшинче нумай арĕсленĕ.

ССРСойуз Аслă Совечĕн Президиумĕнче

Йанварĕн 24-мĕшĕнче Кремлре ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕн пĕрремĕш ларувĕ пулса иртнĕ, ларува М. И. Калинин йулташ председател пулса йертсе пынă. Президиум ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççийе йышăннă саккунсене сойузлă республикăсен чĕлхисемпе, çаван пекех тутар, башкир тата кумык (Дагестан) чĕлхисемпе пичетлесе кăларма, тата ССР Сойуз Конституцин ССР Сойуз Аслă Совечĕ улшăнусемпе хушусем туса йышăнна текстне, çаван пекех ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççин стенографилĕ отчотне кăларма решени йышăннă.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕ ССР Сойуз Аслă Совечĕн „Ведомости Верховного Совета СССР" йатлă официаллă органне çак пайсемпе кăларса тăма постановлени йышăннă: ССР Сойуз Аслă Совечĕ йышăннă саккунсем, ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн указĕсем, информацилĕ материалсем. „Ведомоçсене" сойузла республикăсен чĕлхисемпе кăларса тăмала.

Çавăн пекех „Известия ЦИК СССР и ВЦИК" хаçата реорганизацилесе „Известия Совета Депутатов трудящихся СССР" тума решени йышăннă.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ çирĕм çул тултарнине паллă тăвас май. ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн указĕпе „XX лет Рабоче-Крестьянской Красной Армии" йатлă йубилейлă медаль кăлармала тунă. Йубилейлă медаль çинчен Положени, унăн ÿкерчĕкĕпе çыруне çирĕплетнĕ.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ çирĕм çул тултарнине паллă тăвас май Президиум çар йенĕпе амнисти кăларасси çинчен указ йышăннă.

Депутат билечĕн тата депутат кăкрĕ çине çакса çÿремели паллăн образецĕсене çирĕплетнĕ.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиум Секретариатне туса хунă, Секретариат составне Горкин, Маленков, Николайева, Сидоров, Козлов йулташсене кĕртнĕ тата Ĕçсен Управленине тунă.

Çавăн пекех тата организацилĕ ĕçсем йенĕпе чылай решенисем йышăннă.

(ТАСС).

Аслă Совет депутачĕсене хаваслăн кĕтсе илни

Совет Сойузĕнчи ĕççынниçем халăх шанса суйласа янă хăйсен çыннисене, ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççинчен—хĕрлĕ столицăран таврăнакан депутатсене пит те ăшшăн тата чаплăн кĕтсе илеççĕ.

Бобруйскра (Белоруççи) депутатсем таврăнна йатпа ĕççыннисен 20 пин çынлă митингĕ пулнă. ССР Сойузĕн Аслă Совечне Бобруйск суйлав округĕнчен суйланна депутат Совет Сойузĕн Геройĕ Сергей Прокофйевич Денисов хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă:

— Епĕр, депутатсем, Çеççире мĕнле савăннине каласа пама сăмах та тупма çук. Çеççи пирĕн тăван çĕршывăн пĕтĕм хăватне, совет халăхĕ большевикла партийе, совет правителствине тата аслă Сталина вĕçĕмсĕр йуратнине татах тепĕр хут вăйлăн кăтартрĕ.

Тухса калаçакансем пурте ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççийĕ историлĕ вырăн йышăннине паллă турĕç, аслă Сталинăн çывăх соратникĕ—Вйачеслав Михайлович Молотов пуçпулса йертсе пыракан совет правителствин çĕнĕ составне хĕрÿлĕн саламларĕç.

„Шлях Левина" колхозра (Харьков облăçĕ) депутат А. Н. Линник таврăнна кун нумай çынлă митинг пулнă. Колхозри çынсем пурте тенĕ пекех митинга пынă. Кашнийех хăйсен депутачĕ тĕнчере чи демократилĕ парламент ĕçĕ çинчен каласа кăтартнине итлесшĕн. Александр Николайевич Линник пысăк та уçăмлă сăмах каланă.

— Çеççин сакăр куна пынă ĕçĕнче,—тенĕ вăл,—тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсем, нумай нацилĕ Совет Сойузĕнчи халăхсем шанса суйласа йанисем, государствăлă пысăкран та пысăк ĕçсене татса пачĕç. Епĕр Тинĕс Çар Флочĕн Халăх Комиссариатне тунине хĕрÿлĕн ырларăмăр. Капитализмла [illegible] Сталин йулташ каланă сăмаха асра тытса, тăван çĕршывăн тинĕс чиккисен оборонă хăватне çирĕплетесси çине пысăк тимлĕх хумала пирĕн.

Тутар республикĕнчен кайнă ССР Сойуз Аслă Совечĕн депутачĕсем çак кунсенче Мускавран таврăннă.

Йелабуга суйлав округĕнчен кайнă депутат Хисматов йулташ Мускавра чи пирвайхи хут пулнă. Столицă ăна хăйĕн пысăк та тĕлĕнмеле сооруженийĕсемпе тĕлĕнтернĕ. Вăл метрополитен, Сталин йачĕпе тăракан автозавод, Ленин музейĕ тата Кремль çинчен савăнăçлăн каласа парать. Çеççи ĕçĕ çинчен Хисматов йулташ çапла каланă:

— Çеççи пур депутатсем те пĕр шухăшлă пулнипе тата таччăн пĕтĕçнипе иртрĕ. Депутат Жданов йулташ тата правителства пуçлăхĕ Молотов йулташ Совет Сойузĕн урăхçĕршывсенчи политикăла ыйтувĕсем тăрăх тата пирĕн çĕршывăн оборонине малашне те çирĕплетсе пырас ыйту тăрăх тухса каланисене Аслă Совет пĕр саслăн çирĕплетрĕ.

Пирĕн умра халь пысăк ĕç тăрать,—тесе калать Хисматов йулташ малала.—Тепĕр темиçе кунран епĕ хамăн суйлав округне кайса суйлавçăсене ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççи ĕçĕ çинчен каласа кăтартатăп, суйлавçăсем калаçнисене пурне те итлетĕп тата шута илетĕп. Манăн чылай ыйтусем пур-ха, вĕсене вырăнти организацисем умĕнче лартма тивет.

Епĕ совет парламент депутачĕн аслă йатне тÿрре кăларма пулса ĕçлетĕп.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçне хатĕрленесси

ССР Сойузĕн Государствă план Комиçси çумĕнчи халăх-хуçалăх учочĕн Тĕп управлени начальникĕпе И. В. Саутин йулташпа калаçни

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ халăх-хуçалăх учочĕн Тĕп управленине (ЦУНХУ) 1939 çулхи йанварте Пĕтĕм сойузри халăх перепиçне туса иртерме хушнă. Çак питех те кăткăс тата ответлăран та ответлă ĕçе хатĕрленме пирĕн алăра сурук çулталăк та йулмарĕ.

Çак кĕске срук халăх перепиçне иртерме хатĕрленесси çине питех те пысăккăн çаврăнса пăхма ыйтать.

Перепиç ăнăçлăн иртесси хатĕрленÿ ĕçĕнчи пахалăхран та чылай килет. Перепиçе хатĕрленес ĕç пуçланчĕ ĕнтĕ. Халăх-хуçалăх учочĕн Тĕп Управленинче темиçе канашлу та туса иртернĕ.

Аслăлăх работникĕсене тата статистик-практиксене йавăçтарса 1920 тата 1926 çулсенче тунă халăх перепиçĕн материалĕсене, 1923 çулта хулара тунă халăх перепиçĕн материалĕсене, революциччĕнхи 1897 çулхи перепиç материалĕсене тата йутçĕршывсенчи чылай перепиçсен материалĕсене тĕпчесе вĕреннĕ.

Хальхи вăхăтра халăхсем пурăнакан вырăнсен спискине тăваççĕ. Вăл списока халăхсем йышлăн пурăнакан вырăнсене çеç мар, çавăн пекех тата тĕрлĕрен пĕчĕк йалсене, пăчченшерĕн ларакан пурăнмали çуртсене, сторожсен çурчĕсене, ухатниксен пÿрчĕсене тата ыт. те кĕртмеле. Хуласенче килхуçисен спискисем тăваççĕ, хуласен планĕсемпе районсен картисене тÿрлетсе тухаççĕ, кашни йалсовечĕ çинчен схемăлă картă тăваççĕ.

1939 çулта пулмали халăх перепиçĕ политикăпа хуçалăх йенчен пысăк вырăн йышăнать. Анчах та хăшпĕр çĕрте вырăнти партипе совет организацисем перепиçе хатĕрленес ыйтусем çине кирлĕ таран çаврăнса пăхмаççĕ. Ку вăл пуринчен ытла кадрсене суйласа илес тĕлĕшпе палăрать. Çав вăхăтра Халăхсĕн перепиç ăнăçлăхне, плана тата программăна тĕрĕс тунисĕр пуçне, кадрсем татса параççĕ.

Республикăсенчи, крайсенчи тата облăçсенчи организацисен, чи пирвайах ĕçтăвкомсен, перепиç ĕçĕнче ĕçлеме çынсем суйласа илме, уйрăмăнах районсенчи тата участкăсенчи инспекторсем пулса ĕçлеме çынсем тупса пама пулăшмала пире. (ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Çурçĕр Китайра

ЛОНДОН, 25 (ТАСС). Рейтер агенствин Шанхайри корреспонденчĕ пĕлтерне тăрăх, Йапони çар представителĕ йанварĕн 24-мĕшĕнче: фронтсенче лару-тăру улшăнмасăрах тăрать,—тесе пĕлтернĕ. Вăл каланă тăрăх, Китай çарĕсем Цзинань хулине (Шаньтун провинцин малтанхи столици) çаврăнса илме тата Йаньчжоу патĕнче (Цинаньрен кăнтăрала) Йапони отрйачĕсен подкреплениййĕсене хулана кĕмеле мар тума тăрăшаççĕ. Кунта Китай партизанĕсем Йапони чаçĕсен тылĕнче пысăк активлăх кăтартаççĕ.

Вăтам Китайра

ЛОНДОН, 25. (ТАСС). Рейтер агенстви пĕлтерет: Бенпу (Тяньцзин—Пукоу чукунçул тăрăхĕнчи станци, Фын-Йанран çурçĕр хĕвелтухăçнелле) таврашĕнче Китай çарĕсем пысăккăн пĕр çĕреле пуçтаранса пыни палăрать. Китай влаçĕсем пĕлтерне тăрăх, Ухуçине контратакă тунă чух Китай çарĕсем йапонецсен сакăр самолетне тĕппипех пĕтернĕ, самолечĕсем аеродромра тăнă пулнă.

Кăнтăр Китайра

ЛОНДОН, 25. (ТАСС). Британ Йунайтед пресс агенствин Кантонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: йанварĕн 24-мĕшĕнче Йапони самолечĕсем Кантон—Ханькоу тата Кантон—Коулун чукунçулĕсем тăрăхĕнчи чылай пунктсем çине çĕнĕрен питех те вăйлăн бомбăсем пăрахнă. Çавăн пекех Кантон хулин çурçĕрпе хĕвелавăç пайĕ çине те бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнă вăхăтра 20 çын ытла вилнĕ.

ТОКИО, 24. (ТАСС). Домей Цусин агенствин Нанкинри корреспонденчĕ пĕлтерет: йанварĕн 23-мĕшĕнче Китай самолечĕсен ескадрилйи Ухуçине (Нанкинран кăнтăрала) икĕ хутчен бомбăсем пăрахнă.

ШАНХАЙ. 25 (ТАСС.) „Хуамейваньбао" хаçат пĕлтерне тăрăх, йанварĕн 24 мĕшĕнче Китай самолечĕсем Çуанчен хули патĕнче (Аньхуей провинцин хĕвелтухăç пайĕ) Йапони чаçĕсем çине пенĕ. Йапони чаçĕсем кунта йуханшыв урлă каçма хăтланнă пулнă. Йапонин 300 салтак вилнĕ.

Испанири фронтсенче

Испанин оборонă министерствин йанварĕн 24-мешĕнче пичетленсе тухна пĕлтерÿвĕ тăрăх, Теруел фронтĕнчи пăшалсенчен тата артиллерирен хирĕ-хирĕç перкелесе çеç тăнă.

Республикăн 40 самолечĕ пăлхавçăсен пĕр çĕреле пуçтарăнса пынă çарĕсем çине ăнăçлăн пенĕ. Сывлăшри çапăçу вăхатенче республикă летчикĕсем фашиссен „Фиат" маркăлă самолетне персе антарнă.

Ытти фронтсенче ытлашши пысăк операцисемех пулман.

Еспань агенстви пĕлтернĕ тăрăх йанварĕн 24 мĕшĕнче пăлхавçăсен „Балеарес" тата „Канариас" йатлă çар карапĕсем,—вĕсене миноносецсемпе шыв айĕнче çÿрекен карапсем хÿтĕлесе пынă,—Бу порт çине пеме пикеннĕ пулнă. Анчах та республикă авиацийĕ фашисла карапсем çине атакăласа пурĕ вунтăватă бомба пăрахнă, çакăн хыççăн фашисла карапсен ирĕксĕрех Балеар утравĕсем йенеле тарма тивнĕ.

Республикă самолечĕсем хăйсен базисене пĕр сийенсĕрех çитнĕ.

Гавас агенстви—пăлхавçăсен 16 самолечĕ йанварĕн 24-мĕшĕнче Куенка провинцинчи Енлаудет çине бомбăсем пăрахни çинчен пĕлтерет. Граждăнла халăхсем хушшинче çынсем нумай вилнĕ.

Фашиссен самолечĕсем Реус хули çине икĕ хутчен пырса бомбăсем пăрахсан унта пурĕ 32 çын вилнĕ тата 30 çын аманнă.

Еспань агенстви пĕлтерне тăрăх, йанварĕн 15 мĕшпе 20-мĕш хушшинче фашисла авиаци республикă тылĕнчи хуласем çине 77 хутчен пырса тапăннă. 32 хутчен пырса тапăннă хушăра вĕсем виксе çуралса кайакан тата вут тивертсе йаракан бомбăсем пурĕ 425 пăрахнă. Çак бомбăсенчен граждăнла халăхсем хушшинче 273 çын вилнĕ тата 456 çын аманнă. Пăлхавçăсен 500 бомби пăлхавçăсем хăйсем пăрахас тенĕ тĕле тивмен.

* * *

Йутçĕршывсенчи пичет пĕлтернĕ тăрăх, çак кунсенче Кадикса (Кăнтăр Испанири пысăк порт) Испанин Ифни колонинчен (Атлантикă океанĕн çыранĕ) темиçе пин негр çитнĕ. Васкавлăн çар ĕçне вĕрентнĕ хыççăн пăлхавçăсем вĕсене Теруел фронтне ăсатаççĕ.

(ТАСС).

ССР СОЙУЗĔН 1-МĔШ СОЗЫВРИ АСЛĂ СОВЕЧĔН ПĔРРЕМĔШ ÇЕÇÇИЙЕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (сулахайран сылтăмала) 1) Академик-орденоносец Алексей Николайевич Бах—çул хисепĕпе Сойуз Совечĕн чи ватă депутачĕ. Вăл Сойуз Совечĕн пĕрремĕш çеççине уçрĕ. 2) Националыăçсен Совечĕн депутачĕ НУРПЕИСОВ Садык—Казахстан К(б) Парти Тĕпкомĕн секретарĕ. Ăна Националыăçсен Совечĕн пĕрремĕш çеççин малтанхи ларувĕнче мандат комиçси председателне суйланă. 3) Миха Григорйевич ЦХАКАЙА—çул хисепĕпе Националыăçсен Совечĕн чи ватă депутачĕ. Вăл Националыăçсен Совечĕн пĕрремĕш çеççине уçрĕ. 4) Сойуз Совечĕн депутачĕ Александр Сергейевич Щербаков—ПСК(б)П Иркутск обкомĕн секретарĕ. Ăна Сойуз Совечĕн пĕрремĕш çеççин малтанхи ларувĕнче мандат комиçси председателне суйланă. (Сойузфото).

Кшавăш колхозĕ малта пырат̆

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе Чăваш республикинчи чылай колхозсем социалисăмла ăмăрту пуçарса йачĕç. Анчах Ишлей районĕ çак ĕçре уйрăм вырăн йышăнса тărat̆.

Районри 111 колхозран 24 колхоз анчах ăмăрту договорĕ тунă. Вăл та çултен панă схемă тăрăх çеç. Ăмăрту договăрĕ формине райçĕрĕç пайĕ туса панă. Договăр форми çинче нумай пунктсене сиктерсе хăварнă. Райçĕрĕç пайĕ туса панă договăр форми йурăхсăр йапала. Вăл колхозсен ăмăртуне хĕссе, чăрмантарса пыни пулса тăрат̆. Кшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз вăйлă тырпул туса илессишĕн иртнĕ çул Ишекри Сталин йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлесе пысăк çитĕнÿсем тунă. Иртнĕ çулта Сталин йачĕпе тăракан колхоз мала тухнă. Анчах кăçал Кшавăш колхозĕ Ишек колхозне нумай айакка хăварса, районра чи малти вырăна тухрĕ.

Кшавăш колхозĕ агротехникă кăтартса панă пек ĕçлесе, 1937 çулта кашни гектартан 100 шер пăт тырă туса илнĕ. 41 гектар çинчен 180-шар пăт ыраш илнĕ.

Вăйлă тырпул туса илни колхозниксене пуйан та кул̆турлă пурăнма май парат̆. Колхоз ĕçне чĕререн йуратса ĕçленĕ колхозниксем тата вĕсен çемйисем кăçалхи çул 600—700 тата пиншер пăт илекенсем те пулчĕç.

Борисов Михаил колхозник çемйи 1937 çулти ĕçкунĕсемпе 1000 пăт тырă тата 1884 пăт çĕрулми илчĕ. Иванов Михаил 402 пăт тырă тата 500 пăт ытларах çĕрулми илнĕ.

Кшавăшри колхозниксем çитес çул татах та вăйлă тырпул илессишĕн кĕрешеççĕ.

Кăçал Кшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз Ишекри Сталин йачĕпе тăракан тата „Осоавиахим" колхозсемпе ăмăрту договăрĕ турĕ. Кшавăш колхозĕнчи халĕ бригадăпа бригада, колхозникпе колхозник ăмăртса ĕçлеççĕ Кшавăш колхозĕ ăмăртура çак ĕçсене туma пулчĕ:

1938 çулта пĕтĕм тĕштырă тухăçне 150 пăт, пăрçа—йасмăк 100 пăт, кантăр сÿсĕ 33 пăтран кайа мар тата клевер вăрри 20 пăт, çĕрулми 1200 пăт илме пулчĕ. 1938 çулта вăйлă тырпул илессишĕн халĕ колхоз çак ĕçсене тунă: 201 лав фекали, 10.480 лав торф, 1428 лав тислĕк уйа кăларчĕ, тата кун сăр пуçне 62 центнер кĕл, 58 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлерĕ тата Вăрнартан 4 тоннă фосфорит çăнăхĕ илсе килчĕ.

Колхоз çитес çуракинче пĕтĕм лаптăка суртланă таса вăрлăхпа акса хăварма трийер илсе килнĕ, вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех суртласа хучĕ, халĕ 15 гектар акмалăх пăрçа вăрлăхне алăпа суйлаççĕ. Колхозра агрокружок ĕçлет, 40 колхозник ытла вĕренеççĕ. Ăмăртура 2-мĕш бригадă малта пырат̆. Пайанхи куна колхоз пĕтĕм йалхуçалăх машинисене йусаса лартрĕ. Халех машинăсем çумне вĕсемпе ĕçлекен колхозниксене çирĕплетсе хучĕç.

Агроном Н. Колесников.

Ăмăртса ĕçлекен колхозсенче

ВĂРНАР. Пÿлĕкас Мăратри „Комсомолец" колхоз ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ çуракине хатĕрленесси çинчен йышăннă постановленисене сÿтсе-йавнă хыççăн, кăçалхи вăйлă тырпулшăн кĕрешессине анлăн сарса йачĕ. Йалхуçалăх машинисене йусаса пĕтернĕ ĕнтĕ. Вăрлăхсене пĕр хут трийер витĕр кăларнă. Халĕ иккĕмĕш хут суртлаççĕ. Унсăр пуçне пăрçа вăрлăхне алăпа суйлаççĕ.

Иртнĕ çулта вăрлăха йаровизацилесе акни тырпул тухăçлăхне нумай хăпартрĕ. Кашни гектартан йаровизациленĕ вăрлăх акнă çĕр çинче тырă йаровизацилемесĕр акнă çĕр çинчинчен 3—4 центнер ытларах тухрĕ. Çавна шута илсе кăçал пĕтĕм вăрлăха йаровизацилесе акаççĕ.

Райçĕрĕçпайĕ панă план тăрăх, кăçал колхозăн 5250 лав тислĕк, 130 лав пĕвĕ йушкăнĕ уйа кăлармала, 65 центнер кĕл, 60 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмала, 150 гектар çинче йур тытмала. Халĕ 2000 лав тислĕк, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Колхозниксем тислĕк ытларах хатĕрлес тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кон̆ухсем лашасене лайăх пăхаççĕ. Вăхăтра апат пара̧ççĕ, шăвараççĕ, тислĕкĕсене сийĕнчех тасатаççĕ. Лашасем вал̆л̆и çуракинче çитермĕ çителĕклĕ утă, сĕлĕ уйăрса хунă.

„Комсомолец" колхоз кăçал кирек мĕнле çанталăк пулсан та, кашни гектартан вăтам шутпа 120 пăт тĕштырă туса илессишĕн Кăмашри Сталин йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет. Сталин йачĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе „Комсомолец" колхозран кайа йулса пырат̆. Пайанхи куна çитсе те йалхуçалăх машинĕсене йусама тытăнман. Ытти ĕçсем те начар пулса пыраççĕ.

Ник. Козлов.

Мĕн шутлат̆-ши Трак райçĕрĕç пайĕ?

Парти Обкомĕпе Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, колхозсенче 1937 çулти тупăшсене валеçессине 1937 çулти декабĕрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтермеле пулнă. Анчах та тупăшсене валеçесси Трак районĕнче чăтма çук кайа йулса пырат̆. Йанварĕн 15-мĕшне районри 99 колхозран 46 колхозра кăна тупăшсене валеçсе пĕтернĕ. Ытти 53 колхозра ку ĕçе пачах тытăнман.

Хăшпĕр колхозсем патшалăха памали натурплатăна халĕ те парса татман. Акă, „Сĕнтерÿ" колхоз 63 процент çеç панă.

Çакăнпа пĕрлех районра çуракине хатĕрленес ĕç те начар пырат̆. Районĕпе 9 пин гектар çинче йур тытса хăвармала, хал̆хи вăхăта мĕн пурĕ те 413 гектар çинче щчитсем лартса тухнă.

Йалхуçалăх машинисене йусасси те чăтма çук хуллен пулса пырат̆. Районĕпе 3894 плуг йусамала пулнă пулсан, ку тарана 1389 плуг кăна йусанă-ха. Вăрлăхсене суртласси те çав утăмпах пырат̆.

Ĕçсем çакнашкал начар пынине Трак райçĕрĕç пайĕ аванах пĕлет, анчах ĕçе хăвартлатма тăрăшни пĕрре те палăрмаст̆.

Петров.

Чăваш АССР-нчи МТС-сенчи малта пыракан трактористкăсем, хĕрарăмсем ĕçлекен трактăр бригадисен бригадирĕсем тата комбайнеркăсем пĕтĕм трактористкăсене, комбайнеркăсене, механиксене тата МТС-семпе МТМ-сенчи ытти работниксемпе специалиссене, Чăваш АСС Республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хĕрарăмсем ĕçлекен трактор бригадисен 1936-мĕш çулхи çуркунне пуçланса, 1937 çулта та пынă пĕтĕм Сойузри социалисăмла ăмăртăвне хутшăнса, Пашă Ангелинă бригади пуçарнă тăрăх, хĕрарăмсем ĕçлекен трактор бригадисен çĕршер те пиншер бригадирĕсем, трактористкăсемпе комбайнеркăсем стахановла ĕç тухăçлăхĕсене кăтартрĕç.

Чăваш республикĕн уйхирĕсенче 1937 çулта трактористкăсем çур пин çын ытла, комбайнеркăсем 60 çын ĕçленĕ, 14 хĕрарăм трактор бригадисен бригадирĕсем пулнă. Хĕрарăмсем ĕçлекен чи лайăх трактор бригадисем ÿссе палăрчĕç, иртнĕ çулта вĕсем стахановла ĕç тĕслĕхĕсене кăтартрĕç. Тăвай МТС-чи Йевдокийа Кириллова тата Вăрнар МТС-чи Ефросийа Харитоновна йертсе пыракан бригадăсем урапалă трактор пуçне 900 гектаршар ытла çĕр ĕçленĕ. Лайăх трактористкăсем те ÿсрĕç. Вăрмар МТС-чи трактористкă Елена Петрова хăйĕн сменинче „СТЗ" тракторпа 692 гектар çĕр ĕçленĕ тата сунтармали йапаласене 160 килограм перекетленĕ. Кувакино МТС-чи Анастасийа Гусева „СТЗ" тракторпа хăйĕн сменинче 643 гектар, Патăрйел МТС-чи Екатерина Сулманова 652 гектар çĕр ĕçленĕ.

Социалисăмла ăмăрту пире трактора лайăхрах алла илме, хамăрăн кул̆турăлă тата техникăлă, политикăлă пĕлÿ висине хăпартма пулăшрĕ тата пирĕн хушăран сахал мар çынсене чи малта пыракан трактористкăсемпе бригадирсен хисепне кĕртрĕ.

Колхозра тÿрĕ ĕçлени, вăйлă тырпулшăн бол̆шевикла кĕрешни тата колхозсенчи стахановла ĕç колхозниксемпе колхозницăсен пурнăçне калама çук лайăхлатрĕ. Патăрйел МТС-чи И. Сулманова трактористкă 752 ĕçкунĕ туса 562 пăт тырпа тата 1830 тенкĕ укçан илнĕ. Кун пек трактористкăсемпе бригадирсем пĕтĕмпех мар, вуншар та çĕршер шутланаççĕ.

Трактористкă, трактористсем, комбайнер тата комбайнеркă йулташсем, МТС-семпе МТМ-сенчи инженерла-техника работниксем, колхозниксем тата колхозницăсем! Епĕр, канашлува хутшăнса ĕçленисем, сире хĕрарăмсем ĕçлекен трактор бригадисен, трактористсен тата комбайнеркăсен чи вăйлă тырпулшăн, трактор пуçне нормăна чи нумай тултарассишĕн, сунтармали йапаласене перекетлессишĕн; пирĕн кашни трактористкăн кул̆турипе грамăтнăçне хăпартассишĕн, çĕршыв çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă парас пирки Сталин йулташ лартнă задачăна ăнăçлă пурнăçлассишĕн пыракан социалисăмла ăмăртăва 1938 çулта анлăн сарса пыма чĕнетпĕр.

Епĕр, канашлура пулнисем, хамăр çине çак обйазателствăсене илетпĕр:

Тракторсемпе йалхуçалăх машинĕсене 1938 çулти мартăн 1-мĕш тĕлне чи лайăх пахалăхпа ремонтласа пĕтеретпĕр.

Хĕрарăмсем ĕçлекен трактор бригадисенче ĕç çулĕ хушшинче „СТЗ" трактор пуçне 1000 гектар, „ЧТЗ" трактор пуçне 3000 гектар таран çĕр ĕçлетпĕр. Кашни трактор пуçне сунтармали йапаласене нормăпа кăтартнинчен 10 процентран кайа мар перекетлетпĕр. Трактора лайăх усратпăр, ăна пĕрре те ни çĕмĕрме, ни авари пулма памастпăр. Йусав ĕçе вăхăтра туса ирттеретпĕр. Пĕтĕм ĕçе агротехникă кăтартнă срuксенче тата „хорошо", „отлично" паллăрап кайа мар пахалăхпа туса ирттерме пулатпăр.

Çитес çывăх ик-виçĕ çул хушшинче пирĕн 7 çул вĕреннисенчен кайа мар пĕлÿ илмеле. Малашне кашни бригадăрах пĕтĕмĕшлĕ пĕлĕвĕ ÿстермели шкул тумала та 1938 çулта кашни трактористкă хăйĕн пĕлĕвне 1—2 клас таран хăпартмала.

Епĕр агротехникăна тимлĕн вĕренме, вăйлă тырпул илес ĕçре хамăр тракторсемпе тĕрĕс усă курма сăмах паратпăр. Пĕррĕмĕш категорилĕ тракторист пулмашкăн екзамĕн тытмала; çавăнпа пĕрлех тин кăна ĕçлеме тытăнакан çамрăк тракторисене машинăсене алла илме пулăшмала. Пушă вăхăтпа канăçа кул̆турлă ирттерессине организацилемелле, политкружоксем урлă хамăрăн политикăлă пĕлÿсен висине хăпартмала.

Çар ĕçне вĕренсе, ГСО тата ПВХО значокĕсен нормисене парар. Епĕр Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма права илессишĕн социалисăмла ăмăрту организацилеме пулатпăр. Çакăнпа пĕрлех епĕр Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчен, МТС-сенчен тата комсомолăн районри комитечĕсенчен бригадăсенче ăнăçлăн ĕçлеме пире кирлĕ условисене туса пама ыйтатпăр. Трактористкăсен ĕç условийĕсене лайăхлатасси çинчен ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кăларнă приказа пурнăça кĕртме ыйтатпăр.

Урса кайнă фашиссем Совет Сойузĕ çине тапăнма усăнах хатĕрленеççĕ. Вĕсем пирĕн, Совет çĕршывĕн тĕп саккунĕ—Сталинла Конституци тăрăх ĕмĕрлĕхех колхозсене çирĕплетсе панă çĕрсене хăйсен аллине çавăрса илме хапсăнаççĕ. Вăрçа хатĕрленнĕ çĕре вĕсем хăйсен агенчĕсене, пирĕн тăван çĕршыва сутăнакан ирсĕр предателсене, çынвĕлерекенсен троцкисла-бухаринла бандипчи террорисене хутшăнтараççĕ.

Анчах фашиссем пирĕн çине тапăнма тăччĕр кăна. Епĕр, хĕрарăм трактористсемпе комбайнеркăсем, айакка пăрăнса йулмăпăр. Кирлех пулсан, епĕр танксем çине ларатпăр та, вĕсене бол̆шевиксен партийĕ тата совет правител̆ствi хушнă çĕре илсе кайатпăр.

Çамрăк хĕрарăм йулташсем! Пирĕн 1938 çулта 1937 çултинчен те вăйлăрах рекордлă тырпулшăн кĕрешмеле. Ăмăртса ĕçлекен трактористкăсемпе комбайнеркăсен ретĕсене ÿстерер, хĕрарăмсем ĕçлекен трактор бригадисен хисепне нумайлатар, комбайнеркăсен çĕнĕ кадрĕсене хатĕрлер, хамăр хушăмăртан çĕнĕ стахановкăсене социалисăмла çĕрĕсĕн малта пыракан çыннисене ÿстерер. Мари Автономлă Социалисмла Совет Республикĕнчи трактористкăсене социалисăмла ăмăртăва чĕнес.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ТРАКТОРИСТКĂ-СТАХАНОВКĂСЕМ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сулахайран сылтăмалла—ХАРИТОНОВА Йевросинийа—Вăрнар МТС-н хĕрарăмсен трактор бригадин бригадирĕ. Унăн бригади 1937 ç. кашни трактор пуçне 939,3 гектар сухаланă, КИРИЛЛОВА Йевдокийа—Йантиковăри МТС-н хĕрарăмсен трактор бригадин бригадирĕ. Унăн бригади кашни трактор пуçне 906,2 гектар сухаланă. ПЕТРОВА Йелена — Вăрмар МТС трактористки. Вăл хăйĕн сменинче 696 гектар сухаланă, 160 килограм горÿчи перекетленĕ. 1937 çулта вăл 1819 тенкĕ укçан, 150 пăт ытла тырă ĕçлесе илнĕ.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Колхоз кадрĕсемпе ĕçлемеççĕ

Колхозри ĕçсене ăнăçлăн пурнăçласа пырасси пуринчен ытла колхозри кадрсенчен килет. Колхоз кадрĕсем—правлени членĕсем, бригадирсем колхозниксене мĕн чухлĕ лайăх та йĕркелĕ организацилеççĕ, колхозри ĕçсем çавăн чухлĕ вăхăтра та тирпейлĕ пулса пыраççĕ. Анчах çак пурне те паллă ĕçе Шемшер йалсоветĕнчи (Шупашкар р.) колхозсем, уйрăмах йалсовет асра тытасшăн мар. Кунта колхоз кадрĕсене хаклама, пăхса усрама пĕлмеççĕ, йе пелесшĕн мар.

Халĕ çуракине хĕрсех хатĕрленмели вăхăт. Йалхуçалăх машинĕсене йусаттармалă, вăрлăхсене суртлă вăрлăхсемпе улăштармала, тислĕк, торф йе ытти çĕре çемĕçтермели йапаласене кÿрсе килмеле. Ĕçсем темĕн чухлех. Анчах Шемшерти „Çурлапа Мăлатук" колхоз чылай вăхăт хушши председател тупаймасăр ларчĕ, бригадирсем çук. Тавăшкассинчи „Майăн 1-мĕш" колхозра та ку таринчченех иккĕмĕш бригадăн бригадирне тупаймаççĕ. Ăçта сăлтавĕ? Колхозри кадрсене куллен вĕрентсе, пулăшса, хăйсен ĕçĕпе интересленгерсе пыманинче. Колхоз председателĕсем пĕрер çулталăк пек ĕçлеççĕ те урăх ĕçлемеççĕ, бригадирсем пĕр çу хушшинчи уй-хир ĕçне тăваççĕ те пăрахаççĕ.

Йалсоветпа колхозсем çитес çуракине хатĕрленес ĕçе тытăнманпа пĕрех. Йалхуçалăх машинĕсене йусаман-ха. Вăрлăх хатĕр мар. „Майăн 1-мĕш" колхозăн 19 центнер тулă, 65 центнер сĕлĕ, 4 центнер йасмăк улăштармала, „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозăн та хăшпĕр вăрлăхсене суртлипе улăштарса килмеле. Анчах Тусинкассинчипе Иккассинчи колхозсем çав вăрлăхсене ку таринченех суртламасăр пурăнаççĕ. Çавăнпа та улăштарса килеймеççĕ. Паллах, Шупашкар райçĕрĕç пайĕ те вăрлăхсене улăштарас тĕлĕшпе нимĕн те шутламаст̆.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче йалсоветра агитаторсем лайăх ĕçлерĕç. Çав агитаторсене халĕ колхоз кадрĕсене вĕрентес ĕçе мобилизацилесен ĕç нумай çăмăлланмала пек. Участкăри агрономсем килсе вĕрентсен паха ĕç пулмала. Анчах суйлав кампани иртсенех агитаторсем çинчен манса карĕç. Агрономсем йалсовета йе колхозсене килсе пулăшнине кунта астумаççĕ те.

К. Н.

Райçĕрĕç пайĕ пулăшмаст̆

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи бол̆шевикла çуракине хатĕрленесси çинчен постановленин йышăннăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ.

Анчах Нискассинчи (Тутаркас р.) „Ударник" колхозра çитес çуракине хастарлăн хатĕрленнĕ шутне туса вистăват кун ĕçленĕ хыççăн лăпланса ларчĕç.

Колхозра ултă бригадă. Пур ĕçе те тĕрĕс организацилесен, пĕр кун хушшинчех темĕн те туma пулат̆. Колхозниксен çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес хастарлăх пысăк, анчах вĕсене ĕçре вĕрентсе, йертсе пыракан çук. Колхоз бригадирĕсем çуракине хатĕрленес вăхăтра кунĕ-кунĕпе колхоз правленинче ахалех лараççĕ. Колхоз председателĕ Хапкин, унăн заместителĕ Иаравайкин тата иккĕ счетовод çуракине хатĕрленес ĕçре йертсе пырас вырăнне правленинче сводкăсем кĕтсе лараççĕ. Çапла ларнипе вĕсем хăшпĕр чухне колхозниксем мĕн ĕçленине те сиснесĕрех йулаççĕ.

Колхозăн райçĕрĕç пайĕнчен панă план тăрăх 300 гектар çинче йур тытмала, ку ĕçе шутне çеç туса хунă.

Çавнашкалах план тăрăх 13 пин лав тислĕк 1000 тоннă торф уйа кăлармала, фекали 180 центнер, кĕл 190 центнер пухса хатĕрлемеле пулнă пулсан, пайанхи куна 2 пин лав тислĕк уйа кăларнă. Кĕл 35 центнер çеç пухса хатĕрленĕ. Фосфорит çăнăхĕ, торф пĕр ывăç та хатĕрлемен.

Правленинче ларакансем тислĕк çуккине лăвантарма пăхаççĕ. Анчах çав хушăрах лаша витисем тата МТФ патĕнче сахал мар тислĕк йур айне пулат̆. Кунта тислĕк планпа кăтартнинчен ытлашшипех кăларма пулат̆. Колхозăн выл̆ăх-чĕрлĕх сахал мар.

Акмали вăрлăха 601 центнер суртламала пулсан, 75 центнер çеç суртланă. Алăпа суйласси çинчен шухăшламаççĕ те.

Виççĕмĕш бригадăн бригадирĕ Никонов çуракине хатĕрленессипе нимĕн те туман. Вăл иртнĕ çулта та пухнă кĕлпе усă курман. Çавăнпа та ку бригадăри колхозниксем вырăнти удобренисене пухассишĕн кĕрешмеççĕ. Правленинчи хытă пуслă пуçлăхсем ĕçе организацилеме пĕлмеççĕ. Çавăнпа та, ĕнтĕ колхозниксем, кашни куллен пайан мĕн ĕçлесси çинчен правленирен пырса ыйтаççĕ.

„Ударник" колхоз, йапăхма пуçлани çинчен районри организацисем лайăх пĕлеççĕ пулин те, пулăшса пымаççĕ.

Райçĕрĕç пай пуçлăхĕ Кангин райçĕрĕç пайĕнче ĕçлеме пуçланăранпа та „Ударник" колхоза пĕрре çеç çитсе курнă. Вăл колхоз хуçалăхĕпе паллашмасăрах кайнă.

Колхоз председателĕ Хапкин правленинче сводкăсем кĕтсе ларнипех колхоз хуçалăхне йухăнтарса йачĕ.

П. Йатмасов.

Пыл хурчĕсене лайăх хĕл каçарассишĕн

Вĕлле хурчĕсен усси пыл тата ăвăс панинче çеç мар. Вĕсем йалхуçалăх кул̆турисене чылайĕшне чечек тусанĕпе тусанлантарса вăрлăх тухăçне ÿстернипе те пысăк усă параççĕ. Çавăнпа çулсерен вăйлă тырă туса илес ĕçре вĕлле хурчĕ те хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăрат̆. Çавна кашни колхозникĕн тĕплĕн ăнланса илмеле, хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе кашни колхозрах анлăн сарма тăрăшмала.

Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçре çуллахи вăхăт çеç мар, хĕллехи вăхăт та ответлă вăхăт шутланат̆. Хĕлле колхоз правленийĕсемпе хурт-хăмăр бригадисен пуринчен ытла хуртсене лайăх хĕл каçарасси çине çавăрăнса пăхмала. Çавăнпа пĕрлех тата кадр, рамăлă çĕнĕ вĕллесем, пыл хывмали савăт-сапасем т. ыт. хатĕрлемеле. Паллах, çак ĕçсем пурте план тăрăх пулса пымала.

Хурт-хăмăр усрас ĕç вал̆л̆и кадр хатĕрлесси пирĕн пит кайа йулса пырат̆. Вăл çеç те мар, хăшпĕр колхозсенче тата чылай районсенче çав ĕçе пачах хакламаççĕ. Районсенче пулса иртекен курссене хурт-хăмăр ĕçне йуратакан колхозниксене суйласа йамаççĕ. Колхоз утарĕсенче колхозницăсем пит аван ĕçлеме пултараççĕ. Анчах та çав ĕçе хĕрарăмсене хутшăнтарас мар йăла халиччченех пырат̆. Çапла ĕнтĕ, кадр хатĕрлес ĕç çине кăçал уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмала.

Хĕллехи вăхăтра хуртăстисене хатĕрленисĕр пуçне тата кружоксем организацилесе колхозниксене хурт-хăмăр ĕçĕ çинчен вĕрентессине те анлăн сармала. Хурт-хăмăр ĕçĕпе интересленекен колхозниксем хал̆ пит нумай. Епĕр вĕсем çинчен манма пултараймастпăр. Кунта тата çакна та палăртмала, йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх кашни колхозник хăйĕн пахча вырăнĕнче хурт усрама пултарат̆. Анчах колхозниксене хурт туйантарас ĕç çителĕклĕ пулса пымаст̆, иртнĕ çулта мĕн пурĕ те 203 вĕлле çеç колхозниксене сутнă. Ку вăл пуринчен ытла колхоз утарĕсенче хурт йышне ÿстерме тăрăшманнинчен килекен йапала.

Халиччен хурт усраман колхозсенче хурт утарĕсене çĕнĕрен организацилесси çине малашне пирĕн уйрăмăнах çавăрăнса пăхмала. Çак ĕçе те хĕллех тытăнма кирлĕ, ăçта хурт илме май пуррине халех палăртса хумала. Унсăрăн 1938 çулта та çĕнĕ утарсем организацилес план тулаймасăр йулма пултарат̆. Çак тĕлĕшпе иртнĕ çулта уйрăмăнах Канаш, Çĕмĕрле, Турхан, Елĕк, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпÿ, Йелчĕк, Тутаркас тата Сĕнтĕрвăрри районĕсем йапăх ĕçлерĕç. Çак районсенче кăçал çĕнĕ утарсем организацилессине хакламаннипе вăйлăн кĕрешмеле.

Хĕллехи вăхăтра рамăлă вĕллесене çĕнĕрен тăвас ĕç анлăн сарăлмала. Хăшпĕр çĕрте хал̆ пăтасем çитмеççĕ тесе тăраççĕ. Пăта çитменни вăл вăхăтлă йапала, çавăнпа пăта килессе кĕтсе тăмасăрах вĕлле пайĕсене туса хатĕрлемеле. Кунта çакна палăртма кирлĕ: рамăлă вĕллесем нумай çĕрте çитмеççĕ. Çапла пулсан та, Чăвашместпром вырăнти промышленнăç йенĕпе çав ĕçе хăй çине илесшĕн мар. Малашне вырăнти промышленнăç йенĕпе рамăлă вĕллесем тăвас ĕçе сарма кирлех, мĕншĕн тесен стандартлă вĕллесем тăвас ĕçе малашне епĕр вырăнти кустарсем çине çеç шанса тăма пултараймастпăр.

Искусственный майпа хĕлле тунă карас çулла тунинчен лайăхрах шутланат̆. Вăл хытăрах пулат̆ тата хуртсем те ăна лайăхрах йышăнаççĕ. Çавăнпа колхоз утарĕсен искусственный майпа тунă карассене хал̆ хатĕрлемеле.

Анчах хĕллехи вăхăтри чи ответлă ĕç вăл—хуртсене лайăх пăхса тăрса пурне те сывăн хĕл каçарасси пулат̆. Çак ĕç çине районсенчи çĕрĕç органĕсем пĕртте кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ. Ку çеç те мар, чылай колхозсенче колхоз правленийĕсем те хуртсене лайăх хĕл каçарма кирлĕ условисене туса пама тăрăшмаççĕ. Çавăнпа та иртнĕ çулта хăшпĕр колхозсенче хĕл каçнă вăхăтра хурт йышĕ пит нумай чакнă.

Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Çĕмĕрле районне кăтартса памала. „Комбинат" колхозра пурĕ 592 вĕллерен 383 вĕлле, Хутарти колхозра 101 вĕллерен 98 вĕлле, „Ударник" колхозра 227 вĕллерен 85 вĕлле тата ытти колхозсенче те нумай вилнĕ.

Çавăн пекех Йĕпреçпе Тутаркас районĕсенче те хĕлле хуртсем вилсе пĕтни пулнă.

Иртнĕ çулта хуртсем вилни пуринчен ытла çулçă пылне вĕллере хăварнинчен килнĕ. Çулçă пылне чылай çĕрте кĕркунне йухтарса илмен, вĕллерех хăварнă. Çапла пулсан та хĕлле ăшă çурта кĕртсе хуртсене вĕстернĕ чухне те çав пыла улăштарса илсе, таса пыл йе сахăр паман пулнă.

Хăшпĕр çĕрте тата колхоз утарĕ тăшманлă елементсем алă пырса чикни те хуртсене вĕлерсе пĕтерме пулăшнă. Акă, Çĕмĕрле районĕнчи „Комбинат" колхоза утарне илер. Кунта кĕркунне хуртсене омшанике лартиччен чылай малтан вĕллери пылсене анализ туса пăхнă. Анализ тунă хыççăн вĕллере çулçă пылĕ нумай пулни палăрнă, çавăнпа та çав пыла йухтарса илсе, ун вырăнне лайăх пыл пама хушнă пулнă. Колхозăн 1000 килограм ытла таса пыл пулнă пулин те, анализ тăваканçем хушнине пурнăça кĕртмен. Çапла вара ку колхозра 592 вĕллерен 383 вĕлле хĕл каçайман. Çĕрĕç пайĕ те çак ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхман.

Çав вăхăтрах, хуртсене хĕл каçарас ĕç çине ответлă ĕç çине пăхнă пек пăхнă районсенче хуртсем вилни сахал пулнă. Тĕслĕхрен, Çĕрпÿ районĕнче пурĕ 827 вĕллерен мĕн пурĕ те 4 вĕлле çеç пĕтнĕ.

Пыл хуртсене 100 проценчĕпех лайăх хĕл каçармала. Çавăн пек хĕл каçарма кирлĕ условисем пирĕн пур. Çав шутпа хал̆ мĕн-мĕн тумала-ха? Омшаниксенче йалан пĕр пек температура тытса тăмала, кирлĕ пулсан уçăлтармала тата шăшисем сийенлесрен кирлĕ ĕçсене туса ирттермеле. Çавăн пекех тата, вĕллере пыл пурри-çуккине тĕрĕслесе таса, лайăх пахалăхлă пыл памала. Çулçă пылне хăварнă пулсан, ăна улăштарса илмеле.

Калас пулат̆, Канаш, Çĕмĕрле, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай тата ытти районсенче те иртнĕ кĕркунне хуртсем çулçă пылне нумай пухнă. Çав пыла нумай çĕрте кăçал та вĕллере хăварнă. Ăна халех илсе, ун вырăнне сахăр памасан, хуртсем вилесси кăçал та нумай пулма пултарат̆.

Вĕллере пыл сахал йулнă пулсан, йе çулçă пылĕ йулнă пулсан, хуртсене апатлантарма кирлĕ. Ун пек чухне хуртсене омшаникрен кăлармасăрах çăра пыл памала, таса пыл çителĕксĕр пулсан, сахăр çиропĕ йе сахăр катăкĕсем памала. Çавăн пекех тата канди шĕвекĕ текен йапала та хуртсене апатлантарас ĕçре лайăх апат шутланат̆. Ăна çапла хатĕрлеççĕ: сутă, таса тăшне пĕр литр шыв йараççĕ те вут çинче тытса вĕрилетеççĕ. Вĕри шыв çине икĕ килограм сахăр йарса, йалан хутăштарса тăрса, вĕреме кĕриччен тытса тăраççĕ. Вĕреме кĕрсен пăтратма чарăнаççĕ те вара 15—20 минут хушши вĕренĕ хыççăн çийеле пухăннă лĕккене пухса илеççĕ. Çапла хатĕрленĕ сироп çине 600 грам шĕвек пыл йарса сироппа пĕрле тата тепĕр 3 минут таран вĕретеççĕ. Сивĕнме пуçласан ăна йавăç кашăкпа пĕр йенелле пăтратса тăмала, вăл шурă чуста пек пулса тăрат̆. Ăна вара марл̆ĕпе чĕркесе вĕллене кĕртсе лартма та йурат̆.

Омшанике лартнă хуртсем çулçă пылĕ çинипе, нÿрĕ сывлăш пирки тата ытти сăлтавсем пирки аптăраççĕ пулсан, ун пек вĕллесене ăшă çурта кĕртсе вĕçтерме кирлĕ.

Хĕллехи вăхăтра асăрхаса тăма кирлĕ тепĕр ĕç вăл—омшаникри температурăна пĕр пек тытса тăрасси. Омшаникре температура +5—6 градус таран пулма кирлĕ. Унсăр пуçне тата омшаникре сывлăш та типĕ пулмала.

Шăшисем пулсан, вĕсене çийĕччех пĕтерме тăрăшмала. Пĕтерме май килмесен вĕлле шăтăкĕсене тимĕр пралукран тунă çеткăсемпе картласа лартмала.

Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçри тепĕр пысăк ыйту вăл—хурт-хăмăр бригадисенче, хуртăстасисем хушшинче социалисăмла ăмăрту сарса йарасси. Кашни бригадăн, колхоз утарĕнче ĕçлекен кашни хурт ăстин социалисăмла ăмăртса ĕçлесе, колхоз вĕллисене 100 проценчĕпех хĕл каçарассишĕн кĕрешмеле.

Запол̆ский.

...ктива вĕрентесси—ĕçре тĕп вырăнта пулмала

Шăхасан райĕçтăвкомĕн отчочĕ тă... 1937 çулта семинарсем йалсовет ...седателĕсемпе 10 хут, секретарсемпе ...хут туса иртернĕ. Анчах ку цифăрсе...ненме çук. Дневник тăрăх пăхсан ...инарсем председателсемпе 7 хут, сек...рсемпе 6 хут çеç туса ирттернĕ. ...урех каламала, семинарсем йапăх ка...лусам пек кăна пулса иртеççĕ. Се...арсем ваɉɉи туса хунă программă ... Семинар пухăс умĕн 2—3 кун мала... çеç райĕçтăвком председателĕ, йе ...н заместителĕ унта мĕн вĕренмелине ...артса пынă. Заɉатисем ирттерме уйăр...сынсем те, семинара пухăнакансем те ...атисене пĕр хатĕрленмесĕрех пынă. ...аɉатисем лекцисем вуланипе çеç пул... иртнĕ. Лекцисене çырса пыма сĕтел... ...çителĕклĕ мар. Вĕренмели кĕнекесĕм, ...катсем т. ыт. пособисем вуçех çук. ...еминарсенче йалсовет председателĕ... ...пе секретарĕсен политикăла пĕлĕвне ...рессн çине начар пăхнă. Председа...семпе ирттернĕ семинарсенче мĕн пурĕ ...ыйту сÿтсе-йавнă пулсан, вĕсенчен ...итикăла ыйтусем 4, текущи политикă ...ăвĕсем 15 пулнă. Секретарсемпе мĕн ...ĕ 42 ыйту сÿтсе-йавнă пулсан, вĕсен... ...текущи политикă ыйтăвĕсем 8 çеç, ...актикă ыйтăвĕсем 34 пулнă.

...Советсен политкунĕ совет активĕшĕн ...енÿ кунĕ пулмала. Çапла пулсан та, ...и кунсене Шăхасан районĕнче йапăх ...тереççĕ, час-часах ирттермеççĕ те. ...Политкунсенче сÿтсе-йавма райĕçтăв... ...м нумай ыйтусем парать, кашни куна ...—4 ыйту. Политкунсене ирттерме кас... ...че çеç пухăнаççĕ, çавăнпа та 3—4 ...ăтува пĕр касрах тĕплĕн вĕрепме пул... ...раймаççĕ.

...Час-часах вăл касçенче актив канаш...ĕ çеç туса ирттереççĕ. Райĕçтăвком ...нă ыйтусене сÿтсе те йавмаççĕ.

Райĕçтăвком йалсоветсенче политкуна ...ртерессине йĕркелеме тăрăшмасть. Темă... ...м парсан йалсовет председателĕсем хăйсемех ирттерессе шанать. Сайра-хутра çеç райĕçтăвком работникĕсем политкуна ирттерме тухаççĕ. Политкунсене ирттерес ĕçе райĕçтăвкомĕн кадрсен пайĕн пуçлăхĕ Петров йертсе пымала. Анчах вăл ку ыйтупа 1937 çулта пĕр йалсоветра та пулман. Кадрсене хатĕрлесе ÿстерессипе вăл пачах та ĕçлеместь темеле, йалан инструктор вырăнĕнче кăна çÿрет.

Совет активне заочнă вĕрентес ĕç те йапăх. Аран 22 кандидат тупса Чăваш Тĕпĕçтăвкомне пĕлтернĕ те, халĕ мĕн тумалине те пĕлмеççĕ.

Районра совет активĕн йышĕ пысăк. Йалсоветсенче мĕн пурĕ 246 секци, вĕсенче 2169 член. 61 депутатсен групписем, вĕсенче 480 член. Çакă чи йышлă актив манăçра, вĕсемпе ĕçлемеççĕ. Çавăнпа секцисен, депутат групписен ĕçсем те сахал. Районĕпе вăтамăн ĕçлекенни пĕр 120 секци, 22 депутатсен группи пур,—тесçĕ райĕçтăвком работникĕсем.

Уйхирĕç секцисене пачах манса кайнă вара. Вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешес ĕçре вĕсем пысăк вырăн йышăнмала. Çапах та райçĕрпайĕ вĕсемпе ĕçлессипе нимĕн тума та шутламасть.

Совет суйлавĕ кампанийĕ вăхăтĕнче 200 çын ытла лайăх агитаторсем пулса палăрчĕç. Суйлав иртсен çак актива манчĕç. Вĕсенчен хăшпĕрисене ответлă ĕçсене лартрĕç те, халĕ вĕсене ĕçлеме вĕрентессине, пулăшассине çителĕклĕ туса пымаççĕ.

Йалсовет председателĕсемпе, секретарĕсемпе ирттерекен семинарсен пахалăхне ÿстермеле.

Советсен политкунне ирттерессине йĕркелеме вăл кунсенче йалсоветсене районри актива йамала.

Семинарсенче, политкунсенче вĕренмели темăсене, заɉатисене кам ирттерессине малтанах палăртса райĕçтăвком президиумĕнче çирĕплетмеле.

С. Соколов.

Вăрмарти çар-вĕренÿ пунктĕнчи допризывниксен çырăвĕ

Осоавиахим Чăваш Совечĕн Вăрмарти çар-вĕренÿ пунктĕнчи допризывниксем Чăваш АССР-ри мĕн пур допризывниксем патне çыру çырнă. Çырура çапла çырнă вĕсем:

„Мускав хулинчи, Зарайскăри допризывниксем, Белоруççири стрелоксем, Тулѕскăри аероклубри учлѕотсем тата оборонă ĕçĕнчи ытти активсем Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 20 çул тултарнă йатпа социализăмла ăмăртăва тухрĕç.

Епĕр, Вăрмарти вĕренÿ пунктĕнчи допризывниксем Мускав хулинчи, Сталински районĕнчи Фрунзе йачĕпе тăракан заводри допризывниксем чĕнсе каланине сÿтсе-йаврăмăр. Епĕр—пулас боецсем, çавăнпа та Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 20 çул тултарнă йачĕпе пыракан социализăмла ăмăртува хаваслăн хутшăнса, вĕренÿ пунктĕнчи çар ĕçне тата политикăна вĕренес программăна лайăх вĕренсе тухма пулатпăр. Пирĕн задачă Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне хутла пĕлекен, ÿт-пÿ тĕлĕшĕнчен çирĕп, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕрĕрен тăрăшакан вăй парассн пулать.

Епĕр Чăваш республикинчи пур допризывниксене те Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 20 çул тултарнă йачĕпе пыракан ăмăртува хутшăнса, çар ĕçне тата политикăна вĕренес ĕçре стахановла тĕслĕхсем пама, тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре çирĕп дисциплинăлă боец пулма лайăх хатĕрленме чĕнетпĕр".

Уйава хатĕрленеççĕ

Йанварĕн 31-мĕшĕнче „Коммунар" колхоза организациленни шăпах çичĕ çул çитет. Çак майпа „Коммунар" колхозникĕсем чаплă уйава хатĕрленеççĕ. Вĕсем хăйсен пÿрчĕсене шуратаççĕ, илемлетеççĕ, çуса тасатаççĕ. Колхоз правленийĕ уйав тĕлне 1937 çулти тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене валеççе пама васкать.

И. Сидоркин.

Тĕрлемес йалĕ, Куславкка районĕ.

Йал сăн-сăпачĕ улшăнчĕ

Тĕрлемесре (Куславкка р.) ĕлĕк чиркÿсĕр пуçне урăх нимĕн те пулман. Халь кунта çĕнĕ учреждениесем, культурăлă çуртсем чылай. Йалта оборонă çурчĕ, вăтам шкул, районри колхоз шкулĕ, вулав çурчĕ, парткабинет, колхоз правленийĕ, трахпункт пур. Кусемсĕр пуçне тата сысна ферми, касата çĕлекен ертел пур. Çапла вара Тĕрлемес йалĕн сăн сăпачĕ палламала мар çĕнелсе улшăнчĕ.

И. Шаɉгар

Кадрсем ÿсеççĕ

ВĂРНАР. Çĕнйахакассинче колхоз пуçланиччен пĕр трактористă, ɉотчик та, лейтенант та, шофер та пулман. Халь ку йалта туллимар вăтам шкулсемпе пуçламĕш шкулсенче 100 ача вĕренеççĕ. Йалта 22 тракторист, 2 ɉотчик, 4 лейтенант, 4 шофер, 6 бухгалтер, 3 учител пур.

Ник. Козлов.

Райкомсем пырса курман çĕрте

Комсомол райкомĕсем чылайĕшĕ комсомолецсем хушшинчи политикăла воспитани ĕçне халĕ те тивĕçлипе организацилемен. Ун çинчен „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцине килекен çырусем питĕ уççăн кăтартса пыраççĕ. Комсомолăн хăшпĕр райкомĕсем хăйсен районĕнчи пуçламĕш организацисем мĕнле ĕçленине те пĕлмеççĕ, комсоргсене кулленхи ĕçре пулăшу памаççĕ.

Вăрнар районĕнчен Поɉаков йулташ çапла çырать:

„Вăрнар районĕнчи Сăкăт йалĕнче комсомолăн пуçламĕш организацийĕ саланса кайни виçĕ çул çитет. Анчах комсомол райкомĕнче ĕçлекенсем ăна халĕ те пĕлмеççĕ. Çук организаци йачĕпе отношенисем çыраççĕ. Акă йанварĕн 14-мĕшĕнче райкомран пĕр отношени çитет. Унта: „Комсоргу Сугут-Торбиковской организаци", тесе çырнă. Йалта комсомол организацй çуккипе çак отношенине вулав çурт пуçлăхне, Уткин йулташа, пачĕç"...

Тĕлĕнмеле факт. Вăрнар райкомĕнче ĕçлекенсем хăйсен районĕнчи пуçламĕш организацисем пуррипе çуккине те пĕлмеççĕ. Паллах ĕнтĕ, кунта çамрăксен хушшинче политикăла воспитани ĕçĕ калама çук начар.

Иетĕрне районĕнчи Тури Ачакри пуçламĕш комсомол организацинче те ĕçсем мухтанмалах мар. Ун пирки йалкор Молибден çырать:

„Комсомолецсем йалти çамрăксем хушшинче пример кăтартассине йалтах манса кайнă. Ку таранах çичĕ те политзаɉати ирттермен. Сцена хасачĕ тухмасть. Хăшпĕр комсомолецсем хулиганла ĕçсем туса çÿреççĕ. Комсомолец Громов Гаврил кашни касах улахсенче вăрçса, усал сăмахсемпе тавлашса çÿрет".

Ыйтас килет: — Комсомолăн Иетĕрне райкомĕ çак йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мĕн тăвать-ши?

Çĕрпÿ районĕнчи „Хĕрлĕ Паварн" колхоз çумĕнчи комсомол организацийĕ йулашки вăхăтра начар ĕçлесе пыни çинчен Обофоров йалкор çапла çырать:

„Пĕлтĕр кунта аван ĕçлесе пыратчĕ. Политзаɉатисем план тăрăх пулса иртетчĕç. Хор тата драмкружоксем те лайăх ĕçлетчĕç. Комсомолецсем пур ĕçре те малта пырса хăйсемпе пĕрле комсомол йĕнĕн... тăман çамрăксене илсе пыратчĕç. Анчах кăçал комсомол организацийĕ пурри те паллă мар. Комсомол организацин пухăвĕсем те йĕркелĕ пулмаççĕ. Йалти çамрăксем хушшинче политикăла воспитани ĕçĕ çук... Комсорг Лɉвов Алексей ĕçе йĕркелесе йарасшăн тăрăшмасть. Çавăн пекех комсомолăн Çĕрпÿ райкомĕ те ку организаци çинчен манăнă. Райкомра ĕçлекенсем килсе те курмаççĕ".

Ку анчах мар. Çĕрпÿ райкомолĕ пуçламĕш организацисем тата уйрăм комсомолецсем халɉхи вăхăтра мĕнле ĕçлени пынипе интереслĕнменни çинченех Кириллов йалкор та çырать:

„Çĕрпÿ райкомолĕнче ĕçлекенсем йала тухса комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене пулăшу памаççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ пуçламĕш организацисем начар ĕçлеççĕ. „Камай", „Чурачкă" колхозĕсенчи пуçламĕш организацийĕсенче ĕçсем йапăхма пуçланă. Политкулсем йĕркелĕ ĕçлемеççĕ, комсомолецсем хушшинче дисциплина начар".

Çакăнта кăтартнă заметкăсем пуртăшпĕр районсенче комсомолецсемпе комсомолра тăман çамрăксем хушшинче ĕçлессине начар организациленни çинчен калаççĕ. Комсомол райкомĕсем пуçламĕш организаци ĕçĕсене йĕркелесе йарасшăн та тăрăшмаççĕ. Малашне ку йĕркесĕрлĕхе пĕтермеле.

ПСК(б)П райкомĕсен те манса каймалла мар. Кулленхи ĕçре пулăшса пыни кирлĕ. Çамрăксене болɉшевикла воспитани парассине пĕр минутлăха та манма йурамасть. Вăл пысăк та ответлă ĕç хăй тĕллĕн пулмасть, ăна организацилемеле, йертсе пымала.

Н. Косойкин.

„Автогигант" правленин сийенлĕ ĕçĕ

ЙЕЛЧĔК. Районри çĕрĕç пайĕ нарйачĕ тăрăх, Тимеш йалсоветĕнчи Ворошилов йачĕпе тăракан тата „МОПР" колхозсен „Автогигант" колхоза суртсăр тулă парса, суртлă тулă илсе килмеле пулнă. Ворошилов йачĕпе тăракан колхоз 40 центнер илсе килчĕ те ĕнтĕ. Анчах „Автогигант" правленийĕ суртлă тулă парса йарас вырăнне, акма йурăхсăр тĕрлĕ суртлă тулă парса йанă.

Вăл тулля те пулин чĕрĕ. Хăшпĕр пĕрчисем шăта пуçламĕ. „МОПР" колхоз „Автогигант" колхоза тулă улăштарма пырсан сирĕн тулă кăвакарма пуçланă тесе улăштармасăрах кайнă.

Ахматов.

Колхоза кĕреççĕ

Куславкка районĕнче колхоза кĕрекенсем йышлăлансах пыраççĕ. Çак кунсенче Й. Каганович йачĕпе тăракан колхоза 3 хуçалăх, Йĕршерти Теɉмăн йачĕпе тăракан колхоза 3 хуçалăх, Пăрмасри „Çĕнĕ çул" колхоза—4 хуçалăх кĕчĕç.

М. Йершов.

Çуракине хатĕрленнĕ май, Трак районĕнче йединоличниксем колхоза кĕрес йухăм саралсах пырать. Трак йалсоветне кĕрекен „Хĕрлĕ ту" колхоза 4 хуçалăх, Шурçырмари „Майĕн 1-мĕшĕ" колхоза 3 хуçалăх кĕнĕ.

Н. Петров.

Колхозниксем пуйан пурăнаççĕ

Ĕлĕк Пушнар (Йетĕрне р.) йалĕнчи чухăнсем калама çук начар пурнăçпа пурăннă. Çĕнĕ çула çитеччен вĕсен тыррисем пĕтнĕ. Çитменнине тата нумайĕшĕсем хура тĕтĕмпе пăнтăхса ларнă пÿртсенче пурăннă.

Халĕ йалтах урăхла. Кăçал колхозниксем пысăк тупăшлă тырпул туса илчĕç. Йалта 20 колхозникăн çĕвĕ çĕлемели машинăсем пур, 51 колхозник килĕнче самоварсем пур. Йалта 11 велосипед. Пуçламĕш тата туллимар вăтам шкул пур.

А. Соловйов.

Правлени членĕсене суйланă хыççăн

1937 çулта пирĕн Типнер йалне (Шупашкар р.) Чăвашпромсойузран представител пырса çăматă йăвалакан ертел уçнăччĕ. Правлени членĕсене те суйласа хăварнăччĕ. Анчах Чăвашпромсойуз ертеле пулăшу, кăтарту парассипе нимĕн те туман пирки, пайан та ертел ĕçлеме пуçăнман.

Иванов.

Тĕне хирĕç пропагандăпа агитаци ĕçне вăйлатар

Иулашки вăхăтра тĕне хирĕç кĕрешес ĕç пирĕн республикăра вăйланса пыни курăнать. Кашни районрах тĕне хирĕç вĕрентекен икĕ ернелĕх курссем уçăлчĕç.

Чылай районсенче (Трак, Çĕрпÿ, Вăрнар, Куславкка т. ыт.) районри турă-çсен ушкăнĕсем çирĕпленсе аталанса пыраççĕ. Хăшпĕр районсенче турăсăрсен ячейкисем хутшăнса пыраççĕ. ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавĕ вăхăтĕнче пур районсенче те тĕне хирĕç пропагандăпа агитаци ĕçне вăйлатса йанă. Вăрмар районĕнче тĕне хирĕç темăсемпе докладсем, лекцисем 61 хут туса ирттернĕ, Çĕрпÿ районĕнче 26 доклад тунă. Анчах ку ĕçсем тĕне хирĕç пропагандăн пуçламĕш çеç, малашне тĕне хирĕç пропагандăпа агитацине чăн-чăнах вăйлатас тесен нумай ĕçлемеле.

Тĕне хирĕç пропагандă „пĕтĕмĕшле" пулса пырать, кунта конкретлă ĕç çук. Турра ĕненекен çынсем хушшинче питĕ сахал ĕçлеççĕ, вĕсене пухса калаçусем, докладсем туса тĕнĕн реакцилĕ идеологи çинчен, пупсен, сектантсен ирсĕр контрреволɉуцилĕ ĕçĕсем çинчен ăнлантармаççĕ. Турăсăрсен ушкăнĕн Тĕп совечĕ кăтартнă тăрăх, турра ĕненекен граждансем хушшинче ĕçлесси пайан кунри тĕп задачă пулмала. Районри турăсăрсен Совечĕсем хăйсен пропагандăпа агитаци планне çак ĕçе обйазательнă кÿртмеле, хăçан ăçта, мĕнле калаçусем тăвасси çинчен кăтартса хăвармала. Вырăнти конкретлă примĕрсемпе пупсен, сектантсен ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса, массăна ăнлантармала. ССР Союзĕн Аслă Совечне суйланă вăхăтра агитаторсен, пропагандистсен ĕçĕн опытне пухса усă курмала.

Чăваш республикинчи турăсăрсен Совечĕн Тĕп ушкăнĕ Райсоветсенче начар йертсе пынă. Халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе питĕ йапăх ĕçленĕ, райсоветра ĕçлекен кадăрсене тĕрĕслемен, конкретлă пулăшса пыман. Çавăн пекех районсенчи организацисем: парти райкомĕсем, комсомол организацисем, сутĕç пайĕсем тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе çителĕклĕ йĕркелесе пыман. Профсойузсем çак ĕçрен уйăрăлсах тăнă. Çак ситменлĕхсене халех пĕтермеле.

Парти Обкомĕн решенийĕ тăрăх, февраɉ уйăхĕнче турăсăрсен ушкăнĕн республикăри сйесĕ пулса иртмеле. Çавăнпа та февралĕн 10-мĕшчен районри турăсăрсен ушкăнĕсен конференцисене ирттермеле. Çавăнтах вăрттăн сасăласа райсоветсене çĕнĕрен суйласа лартмала тата делегатсем суйламала. Паллах ĕнтĕ, тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе коммунисла пропагандă ĕçĕпе вăйлăн сыхăнтармала. Тĕне хирĕç пропагандă коммунисла пропагандăн паллă пайĕ пулса тăрать. Парти райкомĕсен, районти сутĕç пайĕсен тĕне хирĕç пропагандăпа агитаци çине тимлĕн пăхмала. Массă хушшинче тĕне хирĕç пропагандăна куллен-кун вăйлатса пымала.

М. С. Цветков.

В. И. ЛЕНИН ВИЛНĔРЕНПЕ 14 ÇУЛ ÇИТНĔ ТĔЛЕ.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. И. Ленин Смоɉнайра телефон тăрăх кăтартусем парать.1917 çул. П. Василйев художник ÿкерчĕкĕ (Изогизăн „Ленин" йатлă аɉбомĕнчен).
Сойузфото репродукцийĕ.

ХĂЙСЕМ ЛАРАКАН ТУРАТА КАСАКАНСЕМ

Фашисăм—вăрçă пулса тăнине пĕтĕм тĕнче пĕлет. Фашисла государствăсем—Германи, Итали тата Йапони—тĕнчен икĕ вĕçĕнче вăрçă вутне чĕртсе йачĕç. Мăн çул çинчи вăрă-хурахсем пек, вĕсем йут çĕрсене тыта-тыта илеççĕ.

Буржуалă-демократилĕ çĕршывсен правителствисем çав пĕтĕм тĕнчене хыптарса йарассипе хăратса тăракан хăрушлăха хирĕç мĕн те пулин тăваççĕ-и? Çук, нимĕн те тумаççĕ. Йалтах урăхла, вĕсем агрессорсене уççăн йе вăрттăн, тÿррĕн йе айăккăн хăйсем хавхалантарса пыраççĕ. Вĕсен политикине хăй ларакан турата касакан çынăн ĕçĕпе танлаштарма пулать.

Пĕр çул кайарах Францире французпа англичанин хушшинче интереслĕ калаçу пулса иртнĕ. Англире Испани пирки мĕнле шутлаççĕ, кам çĕнтересси çине ытларах шанаççĕ?—тесе ыйтнă француз. Англичанин питех те уçă ответ панă. „Епĕр пĕлетпĕр,—тенĕ вăл,—есĕр, Французсем, Валенси* çĕнтерессишĕн тăратăр. Есĕр халăх фрончĕшĕн, республикăшăн, фашисăма хирĕç тăратăр. Епĕр урăхларах шутлатпăр. Франко генералпа çыхăнсан лайăхрах пулĕ, тетпĕр. Çĕнтерÿ ăна, паллах, йÿне ларас çук. Вăл вăйсăрланса çитĕ. Унăн материаллă пулăшу ыйтмала пулĕ. Итали те, Германи те çавăн пек пулăшу параймĕ. Ăна епĕр парăпăр. Анчах епĕр çавăнпа пĕрлех Франкоумне хăшпĕр условисем лартăпăр. Çав условисем пире Испанире економикăлă, политикăлă тата вăрçăлă позици йышăнса тăма пулăшĕç".

Ахаɉ çынсем мар, официаллă представителсем çапла калаçнă. Пĕри—Франци государствин паллă дейателĕ, тепри—Англин йутçĕршыв ĕçĕсен министерствин представителĕ. Калаçу паллă дейател текеннин кабинетĕнче пулса иртнĕ.

Англи правителствин реакцилĕ политики шăпах та çав калаçупа шайлашать. Англи консерваторĕсем фашисла агрессорсене уступкă хыççăн уступкă туса пыраççĕ. Никам та мар, чи малтан вĕсем Франкона вăрçма права парасси çинчен ыйту лартрĕç. Франко патне вĕсем хăйсен суту-илɉÿ çыннисене тата дипломати представителĕсене йараççĕ. Вĕсем Испанире монархи влаçне тавăрма хатĕрленеççĕ.

Англи консерваторĕсем коллективлă хăрушăсăрлăх çинчен калаçни сахал пулман. Анчах калаçни вĕсен калаçнипех тăрса йулать Ĕçре çав принципа пурнăçа кĕртсе пыни çук.

Вĕсем фашисăм пирки çапла шутлаççĕ: „Усал йытта сăнчăрта тытса усрас, ăна татăк кĕсĕксем пăрахса парас, алла вĕрентес, кирлĕ самантра тăшман çине вăслаттарса йарас". Капиталисем Совет Сойузне шутсăр хытă кураймаççĕ.

Англи 1935 çулта фашисла германипе тинĕс договорĕ туса, ăна тинĕс çинче хĕçпăшалланма ирĕк пачĕ. Государствă дейателĕсем час-часах Берлина хутлаççĕ. 1935 çулта унта Саймонпа Иден пулнă. 1937 çул вĕçĕнче Берлина лорд Галифакс пырса кайнă. Çавăн хыççăн Германине колони тупса парас текен ыйту сиксе тухать. Камсен шучĕпе? Паллах, Англи шучĕпе мар, ытти государствăсен, вăйсăррисен, шучĕпе Германине çырлахтарма шутлаççĕ. Çав шутрах вĕсем Совет Сойузĕ çине те час-часах куç хываççĕ.

Ендексен тĕп оргăнĕ „Варшавски дзеник народовы" хăйĕн редакторĕ Козицкий çырнă статйана пичетлесе кăларнă. Вăл фашисла Германин, çавăнпа пĕрлех Германи тусĕ пулса тăракан фашисла Поɉшăн планĕсене çут çанталăка туртса кăларать. Германи, тет Козицкий, Поɉшăран Данцика тата Поморйеве тытса илесшĕн, çавна вара Литвапа, Белоруççипе тата Украинăпа „тăрласшăн".

„Планăн" уйрăм пайĕсем çинче чарăнса тăрса, Козицкий çапла çырать: „Германине Поɉшăпа пĕрле ĕçлени кирлĕ. Мĕншĕн тесен Германи çарĕ Поɉшă урлă кăна ССР Сойузĕн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе тÿррĕмĕн тытăçма пултарать. Çав плана пурнăçа кĕртес ĕçре Поɉшă çарĕ пулăшви ăна питех те кирлĕ пулнă пулĕччĕ".

Англи Совет Сойузĕпе туслă пурнакан Турци çине те алне тăсать. 1937 çулта Монтре хулинче пухăннă конференцире Англи представителĕсем Совет Сойузĕн Хура тинĕсри çар флотне Хура тинĕсе питĕрсе лартасшĕн пулчĕç. Анчах вĕсен çав ĕç тухмарĕ.

Франци правителстви тата мĕнле политикă тытса пырать? Унăн политики Англи политикинчен нумай уйăрăлса тăрать-и? Уйăрăлса тăмасть çеç те мар, Англи политикин йĕрĕпе пырать. Вăл та чăннипе фашисла государствăсен хутне кĕрес политикă тытса пырать. Испани республикне пулăшас вырăнне кансĕрлесе тăрать. Испани ĕçне хутшăнмала мар текен политикă тĕрĕссипе фашиссене çеç пулăшать.

Франци правителстви Гитлер патне хăйĕн представителĕсене йарать, Бексемпе тата ыттисемпе каварлашать, хăйĕн сойузникĕсене тата тусĕсене пăрахма хатĕрленет, Лига наципе коллективлă хăрушăсăрлăх çинчен сахал шутлать, пĕр Англи çине кăна шанать. Францире нумай пулмасть пулса иртнĕ правителствă кризисĕ Францин шултра буржуазийĕ халăх фрончĕ çине вăйлăрах тапăнма хăтланни çине тата фашисăм йенне ытларах та ытларах туртăнни çине кăтартса парать.

Фашисла агрессорсене хавхалантарса пырас политикăн тĕп сăлтавĕ мĕнре пулать-ха? Акă мĕнре: Францире те, Англире те шултра буржуази пуçпулса тăрать. Фабрикантсем, заводчиксем, банкирсем пĕтĕм ĕçе хăйсене кирлĕ пек çавăраççĕ. Вĕсем хăйсен интересĕсемшĕн пĕтĕм наци интересĕсене парне пама та хатĕр.

Сăмахран, Англире халăхăн тăватă пайĕнчен виçĕ пайĕ нацилĕ пурлăха мĕн пурĕ те 7,6 проц. кăна тытса тăрать. Çав хушăрах халăхăн 1,6 проц. çĕршыв пуйанлăхне 66 проц. тытса тăрать. Министăрсем—йе шултра предприйати хуçисем йе банксемпе акционерла обществăсен администраторĕсем пулса тăраççĕ. Англин халɉхи парламенчĕн членĕсем 836 акционерла кампанипе çыхăнса тăраççĕ. Кабинет пуçлăхĕ пулнă Болдуин 1936 çулта 500 пин фунт стерлинг ытла таса тупăш илнĕ.

Капиталисла пысăк государствăсем Инçет Хĕвелтухăçĕнче те агрессорсене хавхалантарса пырас политикăх тытса пыраççĕ. Нумайах та пулмасть Брÿсселте конференци пулса иртрĕ. Çав конференцине Вашингтон договорне алă пусса çирĕплетнĕ государствăсен представителĕсем пухăннă пулнă. Вĕсем Совет Сойузне те çав конференцине пыма чĕннĕ. Унта совет делегачĕсем те пулнă.

Йапони Китайра Англи интересĕсене те, Америкă Пĕрлешÿлĕ штачĕсен интересĕсене те, Франци интересĕсене те хĕснĕ çемĕн ытларах хĕсет. Анчах Брÿсселри конференцире çав государствăсен представителĕсем Йапони агрессине хирĕç нимĕн те шарламан. Йалтах урăхла, Йапонине икĕ-виçĕ хут конференцине делегаци йама тархасласа илнĕ.

Çапла вара, асăннă конференцире Йапонине хирĕç пĕтĕмле фронт тăвасси пулайман. Англичансем американецсем çине, американецсем англичансем çине йăвантарнă. Французсем вара англичансемпе американецсем хушшинче иккеленсе тăнă.

Хĕвеланăçри державăсен представителĕсем Йапонипе Совет Сойузне тĕкĕштерсе йарасшăн пулнă. Тĕрлĕ делегатсемпе журналиссем Совет Сойузĕн делегацийĕпе çавăн çинчен тĕрлĕ майпа сăмах тапратасшăн çунса çÿренĕ. Кĕскен каласан, вĕсем Совет Сойузне Йапонийе хирĕç вăрçă пуçлаттарасшăн пулнă. ССР Сойузĕн представителĕсем провакаторсене мĕнле ответ пани каламасăрах та паллă. Вăрçă вăрçасси—совет çĕршывĕн ĕçĕ мар. Совет Сойузне вăрçă кирлĕ мар, вăрçă уншăн тĕпрен йут ĕç пулса тăрать.

Капиталисла державăсен правителĕсем Совет Сойузне, Йапонине тата Китайа вăрçă хуранне кĕртсе пăрахса вăйсăрлатасшăн, кайран вара виççĕшне те çара алпах йарса илесшĕн. Апла ĕç тухмасан, вĕсем Совет Сойузĕ çине Йапонине, Германине тата Италине вĕскĕртсе йарасшăн. Çапла вĕсен йунлă ĕмĕчĕсем.

Анчах фашисла агрессорсен çулĕ çинче хăшпĕр чăрмавсем тăраççĕ

Вăйсăр пулин те Лига наци агрессорсене кăштах картласа тăрать. Ахаɉтен мар ĕнтĕ Йапони, Германи тата Итали Лига нациран тухса кайрĕç. Вĕсем халĕ Лига нацине йалтах хавшатса çитересшĕн тăрăшаççĕ. Вĕсем коллективлă хăрушăсăрлăха хирĕç уйрăмăнах хытă кĕрешеççĕ. Англи вĕсене çав ĕçре куçкĕретĕн хавхалантарса пырать.

Чикĕсене хÿтлеме тунă уйрăм государствăсен ушкăнĕсем те фашиссене кансĕрлесе тăраççĕ. Çавăн пек ушкăнсем—вĕсем, сăмахран, Кĕçĕн Антантă тата Балканри Антантă. Фашисла вăрă-хурахсем çав ушкăнсене мĕн пур майпа салатса йама тапаçланаççĕ.

Миршăн, демократишĕн, вăрçăна хирĕç, фашисăма хирĕç кĕрешмели аслă фронт вăрçă чĕртекенсен çулĕ çинчи пит те пысăк чăрмав пулса тăрать. Испани халăхĕн паттăр кĕрешĕвĕ—фашисăма хирĕçле вăйсем пĕрлĕх фронтне пĕрлешсен йепле пысăк вăй пулса тăни çине кăтартса парать. Францири халăх фрончĕ те, Китай халăхĕн паттăр кĕрешĕвĕ те çавăн çинех кăтартса параççĕ.

Совет Сойузĕ фашисла агрессорсен çулĕ çинче нимĕнле вăйпа иртсе антараймн чулту пулса тăрать. 170 мĕлйунлă халăх болɉшевиксен партийĕ тавра, аслă Сталин тавра нихăçанхинчен те çирĕп пĕрлешсе тăрать. Совет халăхĕн хÿтлемелĕх те, хÿтлемели те пур. Вăл пĕтĕм тĕнчери халăх фрончĕн мĕн пур отрйачĕсемпе таччăн çыхăнса тăрать. Вăл хăйĕн Аслă Совечĕ урлă фашисла агрессорсене шутсăр çирĕп асăрхаттарчĕ.

Буржуалă-демократилĕ çĕршывсем хăйсем ларакан турата касаççĕ пулсан, касчăр ара, хăйсенех йапăх пулĕ. Персе анас килет пулсан, персе анччăр, анчах кайран малтан хăйсем çинех ÿпкелешчĕр.

*) Ун чухне республикăлă Испани правителстви Валенсире пулнă.

ХИРОТА СĂМАХĔ

ТОКИО, 24. (ТАСС). Домей цусин агентстви Йапонин урăхçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хирота йанварĕн 22-мĕшĕнче Йапони парламенчĕн 73-мĕш çеççи ларувĕнче тухса каланă сăмахне пичетленĕ.

Хирота хăйĕн сăмахне йаланхи пекех: Йапони Китайра территорисем туртса илме ăмсанмасть, унăн тĕллевĕ—Йапонипе Китай хушшинче туслăн пурăнмала тăвасси пулса тăрать, тесе ĕнентернинчен пуçланă.

Малала Хирота „Йапонипе Китай хушшинчи тӳрĕ калаçусене" Германи хутшăнса ĕçленин историне каласа панă. Кунта вăл „Йапонишĕн чи сахал требованисем пулса тăракан" мир условисен тăватă пункчĕ çинчен каланă: 1) Коммунисла, Йапоние хирĕçле тата Манчжоу-Гона хирĕçле политикăна пăрахасси, коммунисăма хирĕçле политикăра Йапонипе Манчжоу-Го пĕрле пуласси. 2) Тивĕçлĕ вырăнсенче çар тытмала мар тăвасси тата вăл вырăнсенче йатарласа режим тăвасси. 3) Йапони, Китай тата Манчжоу-Го хушшинче економикăлă килĕшӳ тăвасси. 4) Китай Йапоние тивĕçлипе таварса парать.

Малала, Китай правителстви çак требованисене ответлессинчен „татăклăн пăрăнние" паллă пулса, Хирота çапла каланă: çакна пула Йапони правителствине йанварĕн 16-мĕшĕнче паллă пĕлтерӳ тума тиврĕ,—тенĕ.

Советпа Йапони хушшинчи çыхăнусем çине çитсе, Хирота çапла каланă: Совет Сойузĕ тĕлĕшпе Йапони политики йаланах хĕв лтухăç Азире лăпкă пурнăçа сыхласа тăрас тĕлĕшпе çак икĕ çĕршыв хушшинчи хутшăнусене йĕркелĕ условисем туса парассине ĕненнинчен тухса тăнă. Çак политикăпа килĕшӳлĕн иртнĕ çулта епĕр нумай вăхăта тăсăлнă пулă тытмали конвенци проплемине пăхса тухса татса пама тăрăшрăмăр, анчах та вăл ăн марĕ. Совет влаçĕсен позицине пула иртнĕ çул вĕçĕнче, пĕр çул кайарахри пекех, пирĕн ирĕкçĕрех лдус вивенчи туса çирĕплетмеле пулчĕ"

Унтан Хирота Çурçĕр Сахалинри Йапони концеççийĕсен ĕçĕсем çинчен каланă, вăл концеççисенче Йапони правителствин интересне паллă туса, Советпа Китай хушшинчи çыхăнусем çинче чарăнса тăнă, Советпа Китай пĕр-пĕрне тапăнмала мар килĕшӳ туса çирĕплетнине паллă туса тата йаланхи пекех Китайра Коминтерн ĕçĕ çине кăтартса, Хирота çапла каланă: Советпа Китай хушшинчи çыхăвусем çине Йапони уйрăмах çавăрăнса пăхать,—тенĕ.

ЧУНЦИН

Чунцин, кăнтăр-хĕвеланăç Китайăн суту-илӳ центрĕ, Китай республикин вăхăтлăх столици пулса тăчĕ. Тĕп учрежденисенчен нумайăшĕ кунта вырнаçнă. Фронтран инçетре, сăртсем хушшинче ларакан Чунцин çине Йапони авиацийĕ пыма пултараймасть, вăл авиаци Китайăн мирлĕ хулисене йалĕсем çине çеç вĕçĕмсĕр вăрăхурахла пырса тапăнать.

Хула Сычуаң провинцинче, Йанцзы йуханшывĕн чăшкă çыранĕ çинче вырнаçнă. (Йанцзы—Китайри чи пысăк йуханшыв, унăн вăрăмĕшĕ 5.000 километр ытла).

Столицăна кунта куçарнăранпа халăх хисепĕ хăвăрт ӳсме пуçланă. Чунцин—хайне йевĕр хула: пĕр кварталрах „потомственхи" ĕç хатĕрĕсемпе ĕçлекен ремесленниксен мастерскойĕсене те тата пысăк банксен кучухнехи çичĕ хутлă çурчĕсене те курма пулать.

Чунцина Нанкинран Тĕп университета куçарнă. Пĕтĕмпе Чунцина çичĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсем куçарнă. Студентсем хăйсен каникулĕсемпе вăрçă ĕçне вайлăн вĕренме усă кураççĕ—фронта кайма хатĕрленеççĕ.

Хула тулашĕнче çуртсем тума строителствă площадкисем тасатса хатĕрлеççĕ, çав çĕнĕрен тăвакан çуртсене тинĕс хĕрринчи тăрăхран куçаракан фабрикăсемпе заводсене вырнаçтармала. Хулара та строителствă вăйлăн пырать.

Китай правителстви Сычуаң провинцине Йапони агрессине хирĕç цумай вăхăт хушши кĕрешмели економикăлă никĕс туса хума тăрăшать.

Провинцин икĕ районĕнче промышленнăçшăн йӳрăхлă нефт запасĕсем тупнă. Çакă вăл Китай хăйĕн нефтне тупассине чăнниех пурнăçа кĕртме пулăшать, ку таринччен Китайăн хăйĕн нихăçан та нефт пулман. Сычуаңре кăмрăк пуйанлăхĕсене каларса усă кураççĕ. Вăрçă пуçлансан малтанхи уйăхсенче кăмрăк каларасси 2,5 хут ӳснĕ.

Хаљхи вăхăтра Чунцинпа Чеңду хули хушшинче 550 километр тăршшĕ чукунçул тăваççĕ, ку вăл Сычуаң провинцинче пĕрремĕш чукунçул линийĕ пулать.

Сычуаң халăхĕ Китай халăхĕ Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕре активлăн хутшăнать. Сычуаң дивизийĕсем, Шаңдун провинцийĕр пуçне, кашни фронтрах пур. Тĕп правителствăн приказĕ тăрăх фронта йанă регуђарлă çарсемсĕр пуçне, Сычуаң провинцийĕ çĕнĕрен 150 пин салтак-доброволец панă ĕнтĕ. Вĕсем хаљ çар ĕçне вĕренсе пĕтереççĕ. Сычуаң нимĕн йăвăрлăхсăрах тата ултă мĕлйун салтак пама пултарать.

Китайăн вăхăтлăх столици чи кирлĕ промышленнăçлă-економикăлă центр, Йапони агрессине хирĕç пыракан нацине ирĕке кăлармали вăрçăн никĕсĕ пулса тăрать.

(ТАСС).

Советпа Естони чиккинче пысăк инцидент пулса иртнĕ

КЕНГИСЕПП, йанварĕн 23-мĕш. (ТАСС). Кăçалхи йанварĕн 19-мĕшĕнче дозора йанă икĕ пограничник Прохорчукпа Лазник Чуд кӳлли çинче чикĕ урлă каçнă çынсене курнă, вĕсем икĕ сунапа Естонирен каçнă та ССР Сойузĕн территорийĕ çине 750 метра йахăн шалала кĕрсе кайнă. Чикĕ урлă каçнă çынсене хăваласа пынă вăхăтра пирĕн пограничниксем çине кĕтмен çĕртенех Естони территоринчен Естони чиккинчи хурал пăшалпа пеме пуçланă, вăл хуралра тăвата çын пулнă—пĕр унтер-офицер тата виçĕ рйадовой, вĕсем совет пограничникĕсем çине 100 метра йахăн хушăран пенĕ. Çапла пенипе икĕ пограничник те вилнĕ. Çак ĕç пулса иртнĕ вырăнта Гдов чикĕ отрйачĕн начаљникĕ майор Петрочук тата çичĕмĕш Кенгисепп чикĕ отрйачĕн штаб начаљникĕ капитан Жуков ĕçе тĕпчеççĕ.

***

Ĕненме тивĕçлĕ источниксенчен ТАСС-а пĕлтернĕ тăрăх, Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ хушнипе, ССР Сойузĕн Естонири полпречĕ Никитин йулташ совет пограничникĕсене вĕлернине хирĕç Естонин йутçĕршыв ĕçĕсен министрствине протест ноти панă, вăл нотăра çак преступление тунăшăн айăплисене примерлă наказани пама тата вĕлернĕ пограничниксен семйисене усрама Естони правителствинчен тӳлеме ыйтнă.

Йанварĕн 24-мĕшĕнче вырăссен аслă живописец-реалисĕ Василий Иванович Суриков çуралнăранпа 90 çул çитрĕ. Вăл туса хăварнă паха картинăсемпе чаплă полотносем вырăссен живопис историнче хăйне уйрăм тапхăр пулса тăраççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. И. Суриковăн „Степан Разин" йатлă картини.

Сойузфото репродукцийĕ.

Физкуђтурă инструкторĕсем

Пирĕн çамрăксем физкуђтурăпа тата спортпа пысăккăн интересленеççĕ. Физкуђтурниксем хушшинчен физкуђтурăпа тата спортпа ĕçлекен кадрсем вуншарăн ӳссе çитĕнеççĕ.

Сăмахран, В. С. Семенов комсомолец, активлă физкуђтурник, ГТО значкисĕ, малтан Çĕрпӳ районĕнчи Туçи промертелĕнче физкуђтура организаторĕ пулса ĕçленĕ. Хаљ Чăваш республикĕнчи физкуђтурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ Семенов йулташа Шупашкар районĕнчи физкуђтурă совечĕн инструкторне лартнă.

И. Й. Йевграфов йулташа комсомолец, активлă физкуђтурник, йĕлтĕрçĕ, ГТО значкисĕ. Малтанхи вăхăтра Чуварлейри санаторинче физкуђтура организаторĕ пулса ĕçленĕ. Хаљ ăна Ишлей районĕнче физкуђтурă совечĕн инструкторне лартнă.

Çавăн пекех Чуварлей санаторинче физкуђтурă организаторĕ пулса ĕçлене Ф. Пушкина та хаљ Çĕрпӳ районĕнче физкуђтурă Совечĕн инструкторĕ пулса ĕçлеме йанă.

И. Семенов.

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ

Йанварĕн 18-мĕшĕнче Атăл леш йенчи капмали çурта Шупашкар хулинчи физкуђтурниксем пуçтарăнчĕç. Вĕсем кăçал хĕле кĕнĕренпе пĕр-пĕрин пултарулăхне танлаштарса пăхман-ха. Çавăнпа та, пайанхи ăмăрту йепле пулса иртесси пурне те интереслентерет.

Кăнтăрла çитнĕ тĕле, чи пирвай, 20 километра чупакан йĕлтĕрçĕсем старта йĕркелесе тăчĕç. Акă судйесем хăйсен сехечĕсем çине тимлĕн пăхаççĕ...

— Марш!

Тапса сикрĕ пĕрремĕш йĕлтĕрçĕ. Сиссе те йулаймарăмăр—сип-симĕс чăрăшсем хушшине кĕрсе кусран сухалчĕ вăл. Кашни 30 çекундă иртмессерен çĕнĕрен те çĕнĕ йĕлтĕрçĕ малала ыткăнать.

Арçынсем хыççăн хĕрарăм йĕлтĕрçĕсем умлăн-хыççăн тапранса карĕç.

Халĕ лере, йĕлтĕрçĕсен çулĕ çинче, кĕрешӳ пынă хушăра, старта йулнисем пĕрремĕш йĕлтĕрçĕне курасшăн сунса тăраççĕ.

20 километрăн çуррине чи малтан „Спартак" обществин физкуђтурникĕ Бурашников тухрĕ. Унтан чылай кайа йулса татах икĕ-виçĕ йĕлтĕрçĕ килет.

Мĕн йуланиш йĕлтĕрçĕ килеччен сирĕлме пĕлмерĕ капмали çурта пухăннă халăх.

Чупмали условисем аванах мар пулин те (йур тарăн, çул тӳрĕ мар, сăрт-тусем), ăмăрту итогĕсене йапăх теме çук.

Пĕтĕмĕшне илсен, итог çапла пулчĕ: арçынсенчен 20 километра чи малтан С. Бурашников („Спартак" команди) чупса çитрĕ, унăн вăхăтчĕ 1 сехет те 39 минут. Иккĕмĕшĕ—Халапсин чупса çитрĕ, унăн вăхăчĕ 1 сехет 53 минут.

Арçынсенчен 30 километра чи малтан 2 сехет те 44 минутра Г. Иванов чупса çитрĕ, иккĕмĕшĕ—Ф. Иванов, унăн вăхăчĕ—3 сехет те 14 минут.

Хĕрарăмсенчен 5 километра чи малтан Гущчина („Спартак" команди) чупса çитрĕ, унăн вăхăчĕ—20 минутта 35 секундă, иккĕмĕшĕ—Лобастова („Спартак" команди), унăн вăхăчĕ 25 минут та 34 секундă.

Хĕрарăмсенчен 10 километра чи малтан учителсен обществинчен Иљйина чупса çитрĕ, унăн вăхăчĕ 1 сехет те 59 секундă, иккĕмĕшĕ—Самойлова унăн пăхăчĕ 1 сехет те 01.4 секундă.

М. Ижейев.

Иккĕмĕш пйатилеткă займон выљавĕн улттăмĕш тиражĕ

ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ йышăннă тăрăх, Икĕ кĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) займон выљавĕн ултăмĕш тиражĕ февраљĕн 17-мĕшпе 18-мĕшĕнче Куйбышев хулинче пулать.

Çак тиражра пĕтĕмпе 173 920 пин тенкĕлĕх—1.060 пин выљав тухмала.

(ТАСС).

„ССР Сойуз историн кĕске курсĕ" учебнике пичетлесе пĕтернĕ

Чăвашполиграфтрестăн Шупашкарти 1-мĕш номĕрлĕ типографийĕ çак кунсенче Шестаков профессор редакципе тухнă „ССР Сойуз историн кĕске курсĕ" учебнике пичетлесе пĕтерчĕ. Çак чăвашла кăçарнă учебнике 67 пин екземпљарпа кăларнă. Кĕнеке хучĕ лайăх, саспаллисем шултра, ӳкерчĕкĕсем таса тухнă. Хакĕ вырăсли пекех — 2 тенкĕ те 25 пус.

Хаљхи вăхăтра учебнике переплĕт пехне панă, кунта ăна хуçлатса çĕлеççĕ, хуплашкине тăваççĕ.

Истори учебникне кăçалхи февралĕн малтанхи çуруйăхĕнче йалтах хатĕрлесе çитерсе, кĕнеке магазинĕсенче сутма пуçлаççĕ. КОГИЗ-ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмне 20 пин екземпљар, Чăвашсойуза 20 пин ытларах тата республикă тулашĕнчи чăваш йалĕсем валљи 20 пин екземпљар параççĕ.

Кĕскен

АЛМА-АТА, 24. Çураки пуçланиччен тĕле Кăнтăр-Казахстан облаçĕнче пурĕ 476 колхозра ача йаçлисем организацилемеле. Вĕсенче 12,5 пин ача пулмала.

(ТАСС).

Кашкăр тытрĕç

Йанварĕн 20-мĕшĕнче, ирхине ирех, Типнер йаленчи (Шупашкар р.) колхоз коңухĕ колхоз лашине шăварма тесе вак касма кайнă пулнă. Вăл хирте пĕр йытă хыттăн çухăрнине илтнĕ. Йытăна кашкăр тытнă пулнă. Коңух хăвăртрах йала таврăнса çакăн çинчен ухат виксене каласа панă. Ухатниксем часах кашкăр хыççăн тухса чупнă. Кашкăра çырмасем урлă кайала-майла хăваласа çӳресе ывăнтарса çитернĕ Вара ăна Типнер çырмин че пăшалпа персе ӳкернĕ. Ухатниксем кашкăр тирне йалпона пачĕç. Вĕсене уишăн преми параççĕ.

Й. Шемйакин.

СУД

Суйа документсемпе банкран укçа илекен

Тăвай районĕнчи государствă банк уйрăмĕнчи аслă бухгалтер помошникĕ Степанов, государствă укçине хăй кăсйине чиксе майпа, Çăлпуçĕнчи йалпо адрĕсĕпе хăй укçине ултă тенкĕ кассăна хурать. Кайран 6 тенкĕ вырăнне 600 тенкĕ туса, çак суйа квитанцийе йалпори Изосимов продавеца тыттарать те, унтан 600 тенкĕ укçа илсе тухса кайать. Изосимов продавец ăна шанмасăр банка хăй кайса тĕрĕслет. Банкра Степанов мĕн пурĕ те ултă тенкĕ çеç хывни куранна. Кун хыççăн ĕçе тĕплĕнрех тĕрĕслесен, Степанов государствă укçине суйа документсем туса татах 1860 тенкĕ хăй кăсйине чикни тупăнать.

Суйа документсем туса государствă укçине хăй кăсйине чиксе пурăннăшăн, Тăвай районĕнчи халăх сучĕ Степанова 5 çул хушши хупса усрамала турĕ.

И. Осипов.

ХРОНИКĂ

Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ М. М. Литвинов йулташ Лигă наци совечĕн 100-мĕш çеççинче хутшăнса ĕçлеме Женевăна тухса кайнă.

(ТАСС).

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Госбанк пĕлтерĕвĕ

Государствă банкĕн Чăваш республикĕнчи Кантурĕ СТО-н 1932-мĕш çулхи йанварĕн 20-мĕшĕнче кăларнă постановленийĕ тăрăх çакна пĕлтерет: Чăвашторг системине кĕрекен Канашри ТОРГ уйрăмне Государствă банкĕ тӳлеме пултарайман организацисен списокне кĕртет.

ТОРГ-ăн уйрăмĕпе таварсем парса-илессипе тата ытти йенпе те çыхăнса тăраканcене çакна пĕлсе тăма пĕлтерет.

Государствă банкĕн Чăваш республикĕнчи Кантурĕ.

Йанварĕн 23-мĕшĕнче, çĕрле Атăл леш йенчен çара çуна кӳлнĕ

3 ÇУЛХИ АЙАР ТАРНĂ.

Тĕсĕ хура-турă, çамки çинче шурă пур, сылтăм ури пакалчак таран шурă. Айар ăçтине пĕлекенсем çак адреспа пĕлтермеле:

ЧАССР, Çĕрпӳ районĕ. Тивĕш йалсовечĕ, „Хĕрлĕ Тивĕш" колхоз.

ЧĂВАШПЕДРАБФАКНЕ

секретар
тата
машинисткă
кирлĕ.

ДИРЕКЦИ.

Шупашкар хули, Карл-Маркс, 65.

Чăвашпромсойузăн Çĕрпӳри профшкулне

Аслă бухгалтер-производственник

КИРЛЕ

Ĕçукçине госнормировани тăрăх тӳлеççĕ.

ДИРЕКЦИ.

Академи театрĕнче

Йанварĕн 27-мĕшĕнче

Вырăсла спектакљ

Б. ЛАВРЕНЕВ

„РАЗЛОМ"

4 пайлă

С. С Марţагин лартать. Художник Йе. Н. Сапожников Балетмейстер М. Д. Йаницкайа.

Талон № 94. Абонемент № 1, Талон № 11.

Çыхăну управленин автобазине

йалан ĕçлеме кирлĕ:

1. Автомашинăсене лайăх пĕлекен опытла електрик
2. 6-мĕш тата 7-мĕш разрйадсенчи слесăрсем
3. Пĕр çултан кайа мар стажлă шоферсем

Адрес: Çыхăну çурчĕ, 2-мĕш хутлăх 30-мĕш пӳлĕм. Телефон № 4—07

3—2

Орфографи ыйтăвĕсем пирки

Чăваш орфографинче улшăнусем тума кирли çинчен „Чăваш Коммунĕ" хаçатра чылай çырчĕç.

Тухса калакансем икĕ тĕп ушкăна уйăрăлаççĕ. Пĕрисем, Резйуков йулташ хыççăн, чăваш алфавитне **щ, ъ, ь, э, ю, я** саспаллисене пĕтĕмĕшпех кĕртесшĕн тăраççĕ. Теприсем—çав саспаллисенчен йе йĕрне те кĕртесшĕн мар, йе **ь** паллăна çеç Горький, Харьков, Чубарь, Пермь тата ытти çавăн йышши сăмахсене çырма кĕртесшĕн.

Пĕрисем **щ, ъ, ь, э, ю, я** саспаллисем вырăс йе ытти чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсене çырма кирлĕ, теççĕ.

Теприсем, вырăс йе ытти халăх сăмахĕсем чăваш чĕлхине кĕрсен, вĕсем урăх чĕлхе сăмахĕсем пулма пăрахаççĕ, вĕсем чăваш чĕлхин харпăрлăхĕ, пуйанлăхĕ, урăхла каласан, чăваш сăмахĕсем пулса тăраççĕ, çавăнпа та вĕсене чăваш саспаллисемпе çырмала, теççĕ.

Анчах тавлашакансенчен нумайĕшĕ çакна асăрхамаççĕ: Пĕр чĕлхен икĕ грамматикă, икĕ тĕрлĕ саккун пулма пултараймасть. Пĕр пек илтĕнекен сасăсене пĕр чĕлхерех пĕринче—пĕр тĕрлĕ, тепринче тепĕр тĕрлĕ саспаллисемпе çырни саккунсăр йапала. Чăваш сăмахĕсене çырнă чух **йу** — йулташ, йуптару; вырăс чĕлхинчен йе урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсене çырнă чух **ю**—Юпитер, каюта; чăваш сăмахĕсене çырнă чух **йа**—йапала, йакăр, Йакку; вырăс чĕлхинчен йе урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсене çырнă чух **Я**—Ялта (Крым), Яков.

Щ, Ъ, Ь, Ю, Э, Я саспаллисене чăваш алфавитне шкул ачисемшĕн кĕртмеле, теççĕ. Анчах шкул ачисемшĕн чăваш çырулăхĕнчи кашни сăмахах чăваш сăмахĕ пулса тăрать. **Йулташ, Юпитер, каюта, йуптару** сăмахсем чăваш çырулăхĕнче тĕл пулаççĕ, пулсан, мĕншĕн-ха пĕринче—**йу,** тепринче — **ю** саспаллипе çырмала?—ача тӳрех çапла ыйтма пултарать. Çакăнтан вара çĕнĕ пăтраштарусем пуçланса кайаççĕ.

Вырăс йе урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсене чăвашла пĕр пăсмасăр çырмала, теççĕ. Капла çырма май пулсан, питех те аван пулнă пулĕччĕ. Анчах апла тума май çук. **Бригадир** сăмаха йат падежĕнче **бригадир** тесе тĕрĕс çыратпăр пулсан, вăл сăмах ытти падежсенче улшăнатех, „чăвашланатех": **бригадира, бригадирăн** тата ыт. те. Уйрăмах пысăк улшăнусем тӳсеççĕ падежсем тăрăх вĕçленĕ чух **Италия, Англия, постановление** йышши сăмахсем. Йат падежĕнче **Англия** тесе çыртăмăр пулсан, ытти падежсенче вара, саккун тăрăх, **Англияна, Англияран, Англиянăн** тесе çырмала цуђ? Тӳрех каламала, ку искусственнă, формаљнă пулать, кун пек калаçăва чăваш çынни нихăçан та вĕренсе çитес çук. Апла пулсан, чăваш чĕлхи халăхăн пурнăçлă чĕлхи пултăр тесен, Италия, Англия, постановление йышши сăмахсене йат падежĕнче те чăвашла формăпа Итали, Англи, постановлени тесе çырмала.

Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене чăваш чĕлхинче вырăсла формăпах çырас тени, вăл çав сăмахсене уйăрса уйрăм картана лартас тенине, йе урăхла каласан, вĕсене чăваш чĕлхине йышăнас мар тенине пĕлтерет. Ку — националисла меџаљĕн тепĕр йенĕ.

Пурнăç ӳссе пынă май, пирĕн чăваш чĕлхин содержанийĕпе форми те саралса, пуйанласа пыраççĕ. Епĕр вырăс йе урăх чĕлхерен пурнăçпа пĕрле кĕрекен сăмахсене йышăнатпăр. Вĕсем пирĕн чĕлхене кĕрсе, социалисăмла содержанипе килĕшсе чăвашла формă йышăннинчен епĕр хăрамастпăр. Буржуалă националиссем чăвашла формăна **прикатир, утарник, хосутарствă, хлот** тата ытти чĕлхене çакăн пек мăкăлтакан, чухнăлатакан, хăртакан сăмахсенче курнă. Коммунистсен партийĕ йĕртсе пынипе, пирĕн халăх буржуалă националиссене пĕр хĕрхенмесĕр таптаса аркатса пычĕ, малала та çаплах аркатса пырĕ.

Украинпа белорус чĕлхисем вырăс чĕлхисем патне, пирĕн чăваш чĕлхи пек мар, пачах çывăх тăраççĕ. Анчах вĕсем хăйсен чĕлхе формине аркатмаççĕ, чĕлхен социалисăмла содержанийĕ ӳснĕ май, унăн формине те куллен аслатса, пуйанлатса пыраççĕ. Вĕсем урăх чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсене хăйсен формипе çырнинчен хăрамаççĕ, вĕсем ку ĕçе хăйуллăн тăваççĕ.

Украинцăсем çыраççĕ информацiйне повідомлення—информационное сообщение; Ради Союзу—Совет Союза; Голова—председатель; Калінін Михайло Іванович—Калинин Михаил Иванович.

Белоруссем çыраççĕ: інфармацыйное поведамленне —информационное сообщение; пасяджэнн—заседание, тата ыт. те.

Епĕр çӳлте **Ю, Я** саспаллисем пирки калаpăмăр. Вĕсене кĕртме сăлтавсем çук. Вĕсем—**йу, йа** саспаллисемпе çителĕклĕн улăшăнаççĕ.

Щ саспалли икĕ саспаллирен тăрать: **ШЧ**. Ун пирки ыйту та пулма пултараймасть.

Э сасăна чăваш чĕлхинче **Е** сасă улăштарать: ăна чăвашсем нихăçан та **йе** тесе каламаççĕ. Епохă, етап тесе çырсан епĕр йепохă, йетап тесе вуламастпăр.

Ъ саспалли те кирли сисĕнмест. Субъект, объект, сăмахсене епĕр субйект, обйект тесе аванах, сăмах йанăравне пăсмасăрах, çыратпăр.

Ь саспаллине кӳртсен те унпа **каймасть, килмест, кайаççĕ, килеççĕ** сăмахсене çырма май килмест. Анчах область, власть сăмахсене **Ь** паллăпа çырсан, каймасть, килмест сăмахсене те ь паллăпа çырасси килсе тухать. Ку таринччен епĕр облăç, влаç, промышленнăç çырнă. Кунта сăмах уйрăмах пăсăлса кайни çук.

Ец, ист суффикспа пĕтекен сăмахсене пирĕн шутпа, çаплипех çырмала: комсомолец, коммунист: комсомољцăн, коммунистăн.

Пирĕн чĕлхере **сăм** суффикса **зм** суффикспа улăштарма кирли çинчен тахçанах каланă. Куна тумалах.

Çапла пирĕн шутпа, Щ, Ъ, Э, Ю, Я саспаллисене кĕртни чăваш чĕлхине нимĕнле улшăну та памасть. **Ь** паллăна уйрăм сăмахсене çырма кĕртмеле.

Орфографи пирки тавлашакансенчен хăшпĕрисем чăваш чĕлхинче Щ, Ъ, Э, Ю, Я саспаллисем çукки вырăс грамматикине вĕренме чăрмантарать, теççĕ. Ку суйа сăмах. Ачасем шкулсенче грамматикăна (вырăсăнне те, чăвашăнне те) лайăх ăнланса вĕренесси чи малтан учителсенчен килет.

Çакнашкал вывăдсем тумала пек, пирĕн шутпа, орфографи ыйтăвĕсене сӳтсе йавнă май.

Арк. Ĕçхĕл.

Чăваш АСС Республикинчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкуђтурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн физкуђтурă инструкторĕсемпе кĕçĕн преподавателсем хатĕрлекен курса

ЗАЙАВЛЕНИСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ

КУРС ÇАКСЕНЕ ХАТĔРЛЕТ:

райĕçтăвкомсем тата республикăри ирĕклĕ спорт обшчествисем валљи квалификацилĕ инструкторсем, вăтам тата тулли мар вăтам шкулсенчи физкуђтурăпа вĕрентекен кĕçĕн преподавателсем.

КУРС ÇАКСЕНЕ ИЛЕÇÇĔ:

арçынсемпе хĕрарăмсене 17 çултан пуçласа 35 çулхисем таран, туллимар вăтам шкул чухлĕ пĕлӳ илнисене тата пĕрремĕш сыпăкри ГТО значок нормисене панисене

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК 6 УЙĂХ

Зайавленипе пĕрле çак документсене тăратмала: туллимар вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат (подлинникне); çуралнн çинчен справкă; физкуђтура йе комсомол организацинчен илнĕ характеристикă; пĕрремĕш сыпăкри ГТО значок нормисене пани çинчен справкă; ĕçленĕ çĕртен хăтарни çинчен справкă; айакран килес текенсем документсемпе пĕрле 40 пуслăх маркă яраççĕ.

ЗАЙАВЛЕНИСЕНЕ 1938 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 15-МĔШЧЕН ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Зайавленисемпе документсене çак адреспе йамала: ЧАССР, Шупашкар хули, Ленинградская урамĕ, 16, Физкуђтурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ.

Курса вĕренме илнисене вĕреннине кура 150 тенкĕрен 250 тенке çити стипенди тӳлеççĕ Айакран килекенсене валљи обшчежитипе выртса тăмали хатĕрсем пулаççĕ.

Курсра вĕренме 1938 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнаççĕ Вĕренме физкуђтурă Комитечĕ чĕннипе кăна килмеле.

Курса вĕренсе пĕтернĕ хыççăн 2 çултан кайа мар Чăваш АСС Республикинче ĕçлемеле.

Чăваш АСС Республикинчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкуђтурăпа Спорт ĕçĕсен Комитечĕ.

3—1

„Чăваш коммунĕ" сыранса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 47 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2, Тираж 14.500. 53—52 ш. 1—1 п. л.

В